Чебоксарская Ц. Б. им. Горького

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 ЙАНВАР 28 ЕРНЕКУН 22 (4835)-мĕш №

ЧĂВАШ КОММУНĔ

20-мĕш çул тухать ● ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомĕн хаçачĕ ● Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĔ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати

ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторăн 0—57, Ред. заместителĕн 0—85, Редакци секретарĕн 4—40, Дежурнăйĕн 4—23

БОЉШЕВИКЛА СЫХĂЛĂХ

Револђуцилĕ сыхăлăх йалапах большевикăн пит те кирлĕ паллăхĕ пулнă. Сыхă пулма, тăшмана вăхăтра пĕлсе тăрă шыв çине кăларма—çакна большевиксене Ленин йалапах вĕрентнĕ, çакна партине йалапах вĕрентет Сталин йулташ. Ленин каланă: „Лайăх коммунис, çав вăхăтрах тата лайăх чекпе пулать" тенĕ. Ку ăнланмала та ĕнтĕ. Большевик—коммунисăм ĕçĕнчи малти фетре тăрса кĕрешекен боец. Тăшмансене хирĕç пыракан клас кĕрешĕвĕнче унăн сисĕмлĕхĕ уйрăмах çивĕч пулмала, унăн тăшман çинчен маскăна вăхăтра сĕвсе илме пĕлмеле.

Ленин—Сталин партин пĕтĕм историйĕнче большевикла сыхăлăх тăшмана, провокатора, оппортуниса хирĕç, кам тăшман позици çине куçнă, çавсене хирĕç тăракан çивĕчрен те çивĕч хĕçпăшал пулнă. Йулашки тапхăрта партин Сталинла Тĕп Комитечĕ револђуцилĕ сыхăлăха хăпартма пĕр хут çеç мар хушнă, капиталисăмла йĕри-тавралăх çинчен асăрхаттарнă, пирĕн вăйсем ӳснĕ май тăшман алла иллепет, тесе шутлани сийĕсли çинчен асăрхаттарнă. Троцкисла-бухаринла шпионсене, буржуалă националиссене, тата ытти йышши фашисла агентсене палăртса тăпăлтăрса кăларни—партире тăракан тата партире тăман кашни большевикăн кирек-мĕнле ларутăрура та, ĕçĕн кирек мĕнле участкинче те револђуцилĕ сыхăлăх мĕнле сӳлти выранта пулмаллине кăтартрĕ.

Çак кунсенче пулса иртнĕ партин Тĕп Комитечĕн Пленумĕ партин кашни членне, партин пур организацисене большевикла сыхăлăха пур майсемпе те хăпартса пыма, партин пур тăшманĕсене те нимĕн хăвармичен палăртса пĕтерсе хума çĕнĕрен çивĕччĕн хушрĕ.

Большевикла сыхлăх йалапах сынна кашни кун тĕплĕн сăпаса пĕлсе тăнинче, çынсем çине тĕплĕн пăхнинче пикĕсленсе тăнă. Большевикла çивĕч сисĕмлĕх большевикла йалапах туссене тăшманран, тăшмана тусран уйăрса илме май панă. Парти хăйĕн членĕсенчен сыхăлăх çинчен сăмах çапнине мар, кампани мар, хăйсене тем пуласран сыхласа хăварас йĕркепе парти членĕсене чухăмăн, кулине партирен кăларма мар, кашни çын çине уйрăмăн тата тимлĕн пăхма хушать.

Фактсем çаксене кăтартса параççĕ: нумай çĕрте партирен чухăмăн кăларас киревсĕр ĕçе халăхăн ылханлă тăшманĕсем, партин тӳрĕ ĕçлекен кадрĕсене çапса хуçма тăрăшнă тăшмансем, сыхăлăх йачĕпе карйерă тăвакан усал çынсем, сыхăлăх йачĕпе маскăпа витĕнсе хăйсен чăн-чăн сăн-сăпатне пытарма, хăйне çапасран çăлса хăварма хăтланакан тăшмансем, йут етемсем тунă.

Çапла, тĕслĕхрен, партин Мариупољ хула комитетĕнче (Донбасс) пуçпулнă халăх тăшманĕ Дискантов парти ĕçĕшĕн тӳрĕ, тăрăшса ĕçлекен çынсене ушкăн-ушкăнĕпе партирен кăларнă. Тепĕр факт—инжейер Гасников ĕçĕ. Тӳрĕ, парти ĕçĕшĕн тăрăшса ĕçлекен специалис йĕркесĕрлĕхсемпе килĕшмен, чăн-чăн тăшмансене, вĕсен киревсĕр ĕçĕсене хăйулăн тăрă шыв çине кăларнă. Партин Карачай Обкомне хĕсĕнсе кĕнĕ буржуалă националиссем Гасниковран парти билетне туртса илнĕ. Нимĕн айăпсăр çынна халăх умĕнче шанчăка, тĕрĕсе тухма 6 уйăх кирлĕ пулнă.

Большевикла руководителĕн сыхăлăхĕ нихăçан та сисĕмлĕхрен, çыншăн тăрăшнинчен уйăрăлса тăмасть. Партин кашни членĕ çине, парти работникĕ çине уйрăмăн пăхасси йалапах тĕп выранта пулнă. Пуриншĕн те паллă, февраљ-мартра пулса иртнĕ ПСК(б)П Тĕпкомĕн Пленумĕ пирĕн партири хăшпĕр руководителсем „йединицăсем" çинчен, партин уйрăм членĕсем çинчен, вĕсен кунçулĕсем çинчен тăрăшманнисене хытă сивлерĕ.

Çакăн йышши руководителсем парти Тĕпкомĕн февраљ-мартри пленумĕ хыççăн та тӳрленмен. Акă çакăн йышши „руководствăна" йар уççăн кăтартса паракан пример. 1936 çулта массăлă заочнă вĕренмели институтра (Свердловск хулинчи Ленинский район) пĕчĕк вечер тунă, унта 15 коммунис пулнă. 1937 çулта вечерта пулнисенчен пĕри халăх тăшманĕ пулнине палăрнă. Партин Ленинский райкомĕ, вуншарсем çинчен çеç шутланăскер, йединицăсемшĕн тăрăшманскер, вечерта пулнă ытти 14 коммунисне те партирен кăларнă. Çак кунсенче каллех çак райкомах парти членĕсен кунçулĕ çине айăпла-çăмăлтайла пăхнипе хăйне чапа кăларнă. Йанварĕн 14-мĕшĕнче парти райкомĕн бӳровĕ тутар педучилишчинчи коммуниссене пурне те партирен кăларнă. Коммуниссен кунçулĕ çине курттăмăн пăхнă. „Тутар педучилишчинчи парторганизацин пĕтĕм составне халăх тăшманĕсене пулăшакансем тесе партирен кăларнă пирки, пуçламĕш парторганизацине пĕтерес" тесе çырнă хăйĕн решенийĕнче çак райком.

Коммунисăмăн аслă идеалне пурнăçа кĕртекен Ленин—Сталин партийĕ большевика, парти руководителне, боеца хăйĕн пĕтĕм ĕçĕнче йалапах çирĕп принциплă пулма, тăшмана хирĕç хайаррăн кĕрешме, тӳрĕ ĕçлекен çын çине тимлĕн пăхма вĕрентсе çитĕнтерет. Сыхăлăх, сисĕмлĕх тата çын çине тимлĕн пăхни—çаксем пурте пĕрлĕх, пĕр ĕç пулса тăраççĕ.

Парти Тĕп Комитечĕн Пленумĕ хăйĕн постановленийĕнче çапла каланă:

„Çакна ăнланма тахçанах вăхăт ĕнтĕ: большевикла сыхăлăхăн ăшчикĕ вăл—темле чейеленсен те, темĕнле пăркалансан та, темĕнле тумпа витĕнсен те тăшмана тăрă шыв çине кăларма пĕлнинче пулать, ал айне пулакансене пурне те нимĕн уйаса тăмасăрах йе „кирек мĕн пулассинчен шиклемсе" партирен вуншар тата çĕршер кăларса пăрахассинче мар.

Çакна ăнланма тахçанах вăхăт ĕнтĕ: большевикла сыхăлăх партирен кăларасси çинчен, йе кăларнисене парти членĕн правине кайала тавăрса парасси çинчен тăракан ыйтува татса панă чухне, чи пысăккăн асăрханса сӳтсе-йавассине тата йулташла тăрăшассине пĕтерсе лартмасть çеç мар, йăлтах урăхла, пушшех те асăрханса тата йулташла тăрăшса пăхассине пĕлтерет".

Парти Тĕп Комитечĕн Пленумĕн çак кăтартăвĕсене райкомсенче, хула комитечĕсенче, обкомсенче, партин нумай организацийĕсенче купаланнă апелђацисене пăхса тухнă чухне вĕсне çитиччен пурнăçа кĕртмеле. Апелђацисене пăхса тухса, апелђаци паракан çыннăн политикăла сăн-сăпатне, унăн ĕçне тĕплĕн пăхса тухни кирлĕ. Партирен кăларма май панă материалсене тĕплĕн тĕрĕслесе тухмала, елеклени пулсан, кăтартулă сыхăлăх çинче спекулђаци тунă пулсан—елекçĕне çирĕп ответ тыттармала.

ПСК(б)П Тĕпкомĕн Пленумĕ большевикла сыхăлăхăн ăшчикĕ çинчен кăтартса пани пĕтĕм парти ĕçĕнче тĕп выранта пулать. Ал айне пулнă (час-часах елеклĕ) зайавлени коммунисăн партилĕ кунçулне татса памали виçе пулма пултараймасть, парти членне, работнике, çынна тĕплĕн сăнаса вĕренни, ун çине тĕплĕн пăхни кирлĕ. Работникăн ĕçне пĕлмеле, вăл кампа хутшăннине пĕлмеле, вăл мĕнле пурăннине, мĕнле сывланине пĕлмеле—çакăн чухне çеç парти руководителĕ большевикла сыхăлăхлă пулма пултарать. Çакнашкал парти руководителĕ кĕтмен çĕртен сиксе тухнă ĕç умĕнче пулмасть, туссене тăшман выраннe, тăшмана тус выраннe шутламасть.

Большевикла партилĕ ĕç—вăл чи малтан уйрăм коммуниспа ĕçлени, кашнин çине уйрăмăн пăхни тăрăх çынсене шутласа тĕрĕс воспитани пани. Тул йенчен „массăлă ĕçсем саралнă", тултан пăхсан партилĕ ĕçĕн тĕслĕхĕсем пур, анчах тĕп ĕç—парти членĕ çине уйрăмăн пăхни, коммунисшăн йулташла тăрăшни çук руководител банкрота тухма пултарать. Тултан шавланă, çынсем çине курттăмăн пăхнă лару-тăрура чăн-чăн сыхăлăх кăтартулă, фађшивăй сыхăлăхпа улшăнать, ку вăл тăшмансене çеç усăлă.

Работниксене сăнаса вĕренни, вĕсемшĕн йулташла тăрăшни уйрăмах халĕ, çĕнĕ кадрсене нумайăн йертсе пырас ĕçе лартнă чухне, партире тăракан тата партире тăман актива вĕрентсе çитĕнтерес тĕлĕшпе парти организацисем умĕнче питĕ те пысăк задачă тăнă чухне кирлĕ.

Партин Сталинла Тĕп Комитечĕн Пленумĕ партин пур организацисене те, партин пур руководителĕсене те парти массисен сыхăлăхне пур майсемпе те ӳстерсе пыма, партин ирĕклĕ тата ирĕксĕр тăшманĕсене пурнĕ те тăрă шыв çине кăларса тĕпĕ-тымарĕпех кăкласа пĕтерме хушать. Çак задача ăнăçулă пурнăçа кĕртес пулсан, парти членĕсем çине чуххăмăн, уйрăмăн мар, ушкăнпа пăхас практикăна пĕтерсе хуни кирлĕ. Çак задача пурнăçа кĕртес пулсан, парти ĕçне идейă тĕлĕшĕнчен çӳле хăпартмала, çапла тунипе парти Тĕп Комитечĕн йанварти пленумĕ туçса палăртнă тата хытă сивленĕ йăнăшсемпе пăсса пĕтернисене парти организацисем текех тăвасси çинчен шухăшра та ан пултăр.

(„Правда").

Калмык АСС Республикĕнче çĕнĕ районсем тунă

Пĕтĕм Российăри Ĕçтăвакан Тĕп Комитет Калмык АСС Республикĕнче çакнашкал çĕнĕ улусем (районсем) тума йышăнва: Хĕвеланăç улусне пĕчĕклетсе Йашалтински улус, центре Йашалта йалĕ; Долбанск тата Лаганск улусесене пĕчĕклетсе Улан-Холђски улус, центрĕ Улан-Хол йалĕ; Приволжски улуса пĕчĕклетсе Йустински улус, центрĕ Йуста йалĕ; Вăрам улуса пĕтерсе Прийутинск улус, центрĕ Прийутнойе йалĕ; тата Троицки улус, центрĕ Троицкойе йалĕ; Сарпински улуса пĕчĕклетсе икĕ улус: Мало-Дербетовски улус, центрĕ Малые Дербеты йалĕ тата Кетченеровски улус, центрĕ Кетченер-Шебенеры йалĕ.

Пĕтĕм Российăри Ĕçтăвакан Тĕп Комитет Сарпински улус центрне Бершин-Сал йалне куçарма йышăннă.

(ТАСС).

ССР СОЙУЗĔН 1-МĔШ СОЗЫВРИ АСЛĂ СОВЕЧĔН ПĔРРЕМĔШ ÇЕÇÇИЙĔ.
ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: ССРС Аслă Совет депутачĕсем М. И. Калинин, К. Йе. Ворошилов, И. В. Сталин, А. А. Жданов тата А. А. Андрейев Национађнăçсен Совечĕн 1938 çулхи йанварĕн 14-мĕшĕнче пулнă ларувĕнче.
С. Лоскутов фото-ӳкерчĕкĕ (Сойузфото).

ССР Сойузĕн Аслă Совет депутатне Корйукина й-ша партине илнĕ

ВОЛОГДĂ, йанварĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). ПСК(б)П Междуреченск райкомĕ ССР Сойуз Аслă Совечĕн депутатне орденоносец Манефа Владимировна Корйукинана парти кандидатне илме йышăннă решенине Вологдă облăçĕнчи ПСК(б)П Тĕпкомĕн Оргбӳровĕ çирĕплетнĕ.

Гектартан 40 центнер тулă туса илессишĕн

Славйанск районĕнчи колхозсен ăмăртувĕ

КРАСНОДАР, 25 (ТАСС). Иртнĕ çулта пысăк тухăçла тырпул туса илес тĕлĕшпе Славйанск районĕ крайра пĕрремĕш выран йышăннă. Район гектартан вăтамăн 21,4 центнер тулă пухса илнĕ. Халь районра иртнĕ çулхинчен те пысăк тухăçла тырпул туса илес майпа ăмăрту анлăн саралса пырать.

Ăмăртува „Красный Таманец" колхоз пуçарса йанă. Вăл иртнĕ çулта гектартан 24,5 центнер тулă туса илнĕ. Колхозниксем çитес çулта гектартан 40 центнер тулă туса илме пулаççĕ. „Красный Таманец" колхозпа ăмăртса ĕçлеме „Путь к социализму" колхоз колхозникĕсем хутшăнна. Вĕсем гектар пуçне вăтамран 40 центнер тулă, кĕрхи урпа—45 центнер тата кукуруз гектартан—62 центнер илме пулаççĕ. Районри ытти колхозсем те пĕрпĕрипне ăмăртса ĕçлеççĕ.

Стахановецсем кусенчен те пысăк обйазателствасем илеççĕ. „Красный Таманец" колхоз звенийевойĕ Иван Кузьменко, 1937 çулта гектартан 75,6 центнер тулă туса илнĕскер, çитес çулта гектартан 90 центнер тулă туса илме пулать. Нумайах пулмасть вăл, ССР Сойузĕн Çĕрес Халах Комиссариачĕ чĕннипе Мускавра пулнă, унта Вилђиамс академикпе курса калаçнă, хай тума палăртнă ĕçсене пурнăçа кĕртес шанчăклăхпа килне таврăннă.

Совет Сойузĕ тăрăх

** „Червоный серп" йатлă йалхуçалăх ĕртел колхозĕ икĕсем Клђучевск районĕн (Актӳбинск облăçĕ) хĕвеланăç пайĕнче çĕркамрăк тупса палăртнă.

** Арменири колхозсем, сăртсем çинчен вухса анакан шыв вайĕпе уса курса, хăйсем валљи гидростанцисем таваççĕ. 120 йала електрофикацилене те ĕнтĕ. Кăçалхи çул Арменири колхозсем 10 гидростанци тăваççĕ.

** Мускаври метрополитенăн виççĕмĕш черетри пĕрремĕш станцине тума пуçланă, пĕрремĕш станци „Сталин йачĕпе тăракан автозавод" йатлă пулать. Февраљ уйăхĕнче тоннел шăтармали мал танхи икĕ шчит ĕçлеме пуçлать. Апрелте шахтăсем тума пуçлаççĕ.

** Белоруççинчи оперăпа балетăн государствă театрĕ Тикоцкий композитор çырнă „Михась Подгорный" оперăна лартма хатĕрленет. Ку вăл—совет Белоруççин пĕрремĕш оперĕ шутланать.

Рабочисен бригадисем машинă-трактор станцисенче

ДОН-çи—РОСТОВ, йанварĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Ростоври, Таганрогри, Новочеркасскри тата ытти хуласенчи предприйатисем 103 машинă-трактор станцисем тарах бригадăсем кăларса йанă. Бригадăсем выранĕсенче пысăк пулăшу параççĕ.

Ростсељмаш заводĕнчи рабочисен бригади Морозовск районĕнчи моторсем йусакан завода пулăшнă. Çĕмĕрĕлсе йĕркесĕрлĕхе тухнă станоксемпе инструментсене йĕркене кĕртнĕ. Кашни станокăн хăйĕн производствăлă план пур. Ĕç пĕтне хыççăн кашни кунах вунă минутлă производствăлă канашлусем туса ирттереççĕ. Ростоври токар Станкевич йулташ запаслă чаçсене хăйранă çĕрте стахановла ĕçтухăçлăхĕн тĕслĕхне кăтартнă. Вăл кашни кунах нормăна 400—500 процент тултарать. Ун хыççăн выранти токарсем Карпенко, Фомин тата ытти йулташсем нормăна 200—300 процент таран тултарма пуçланă.

Бољше-Крепинск, Хлеборобинск тата Куберлейевск машинă-трактор станцисем хуласенчи предприйатисем пулăшнипе тракторсене йусаса пĕтереççĕ.

Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕ 20 çул тултарнă йубилейе хатерленни

Рабочисемпе хресченсен Хĕрлĕ Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕн чаплă йубилейне пĕтĕм çĕршыв хатĕрленет.

Хĕрлĕ Çар чаçĕсемпе подразделенисем, çапăçу суднисем Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕ 20 çул тултарнă йатпа пуçласа йанă социалисăмлă ăмăртува хутшăннă. Йубилей кунĕсенче чи лайăх боец-пограничниксем аслă ССР Сойузĕн чиккисене хураллама хисеплĕ сталинла вахтăна тăраççĕ.

Йубилейе хатĕрленнĕ май, Мускаври Пролетарский районри „Осоавиахим" заводри командăсен стрелковăй ăмăртуне организациленĕ. Ленинградри предприйатисенче Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕ 20 çул тултарни çинчен 300 лекци организациленĕ. Йубилей кунĕсенче Горькинчи Молотов йачĕпе тăракан автозаводра пăшал перес тĕлĕшпе пысăк ăмăртусем пулса иртмеле. Ку ăмăртусене 40 командă хутшăнмала.

Сталин йачĕпе тăракан колхозра (Каменец-Подољск облăçĕ, Украинă) оборонă сурчĕ уçаççĕ. Суртра тăватă клас пулать: пăшал пемели, кавалери, химилĕ тапăнуран хӳтĕленме хатĕрленмели тата çапăçу техникин класĕ. Кунта колхоз çамрăкĕсем автомобилпе танк тытса пырас техникăна вĕренмеле. Оборонă çурчĕ çумĕнче шалта пăшал пемели тир организацилеççĕ, тир тăршшĕ 50 метр пулмала. Тĕрлĕрен оборонă ĕçне вĕренме колхоз çамрăкĕсем кружоксем организацилеççĕ.

* * *

Февралĕн 18-мĕшĕнчен пуçласа 25-мĕшне çитиччен Мускавра Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕпе „Динамо" спорт обшчествин Пĕтĕм Сойузри хĕллехи спартакиади пулса иртет. Спартакиадăна Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕпе ВЧК—ОГПУ—НКВД 20 çул тата „Динамо" спорт обшчестви 15 çул тултарнă йатпа туса ирттереççĕ. Спартакиадăна Хĕрлĕ Çарти тата „Динамо" обшчествинчи чи лайăх физкуљтурниксем 1.400 çын хутшăнаççĕ.

(ТАСС).

Пĕтĕм Сойузри йалхуçалăх выставкинче пулма 46.023 зайавкă панă

Чи лайăх колхозсем, совхозсем, çавăн пекех Сойузри йалхуçалăхĕн малта пыракан çыннисемпе организаторĕсем пурте социалисăмлă çĕрĕçĕн çитĕнӳвĕсене пĕтĕм халăх смотрĕнче—1938 çулта Мускавра пулакан йалхуçалăх выставкинче кăтартма тăрăшаççĕ.

Выставкă комитетне 46.023 зайавкă килнĕ. Пуринчен ытла колхозсем нумай панă—23 480 зайавкă. Йалхуçалăхĕн малта пыракан çыннисенчен тата организаторĕсенчен 17.870, колхозлă таварлă фермăсенчен—4 067 зайавкă килнĕ. Совхозсенчен сахалтарах—476 зайавкă кана.

(ТАСС).

Доменшчиксен чаплă çитĕнӳвĕ

КРАМАТОРСК, 26. ССР Сойузĕн Аслă Совет Çессийĕ кунĕсенче Краматорскри Куйбышев йачĕпе тăракан заводри доменшчиксем чукун шăратассине чылай ӳстерне. Йанварĕн 24-мĕшĕнче вĕсем плана 103,4 процент тултарнă. Уйрăмах иккĕмĕш камака коллективе лайăх ĕçлет. Уйăх пуçламăшĕнчен вара вăл камака планран ирттерсе 1.071 тонна чукун парса, заданийе 122,6 процент тултарнă.

Йанварĕн 24-мĕшĕнче заводри доменшчиксем талăкри заданийе 124,2 процент тултарнă. Никишин йулташ смени плана 152,2 процент, Горохов йулташ смени—153,7 процент тултарнă.

(ТАСС).

Искусствă работникĕсен профсойузĕн Пĕтĕм Сойузри сийесĕ

Йанварĕн 28-мĕшĕнче Мускаври Ленин орденлĕ Кĕçĕн Академи театрĕнче искусствă работникĕсен профсойузĕн Пĕтĕм Сойузри пĕрремĕш сийесĕ уçăлать.

Сийесра 124 пин член пĕрлештерсе тăракан искусствă работникĕсен Сойузĕнчен 197 делегат пулмала.

Сийес 7—8 кун пымалла. Унта искусствă работникĕсен сойузĕн Тĕп Комитечĕн доклачĕсене тата ревизи комиççин докладне итлесе сӳтсе-йавмала. Кунсăр пуçне Тĕп комитет тата ревизи комиççи, çавăн пекех профессилĕ сойузсен Пĕтĕм Сойузри сийесне йама делегатсем суйласа хăвармала.

(ТАСС).

ИСПАНИРИ ФРОНТСЕНЧЕ

Теруел районĕнче çапăçакан республикă çарĕсем йанварĕн 25-мĕшĕнче пĕр сăрт тӳпине тата халăх пурăнакан чылай пунктсене туртса илнĕ. Фашиссен пит нумай ескадрилйисем республиканецсене малала кайма чăрмантарма хăтланнă. Апла пулсан та республиканецсем çĕнĕрен йышăнса илнĕ позицисене пурне те хăйсен аллинчех сыхласа хăварнă.

Сурран çар чаçĕсене пулăшса пыракан республикă истребителĕсем çине фашиссен 6 самољочĕ атакă тунă, вĕсем çумне часах тата темиçе самољот хутшăннă. Республикă љотчикĕсем фашиссен самољочĕсене хăваласа йанă, вĕсенчен икĕшне персе ӳкернĕ.

Республикă авиацийĕ Вађйадолид çине ăнăçлăн пырса тапăннă, чукунçул станци районне тата ремонт мастерскойĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Бомбăсем пăрахнине айалта темĕн сиксе çуралса кайнă. Пăлхавçăсен çар склачĕ сиксе çуралнă пулмала, тесе шутлаççĕ.

***

Франци пичечĕн сведенийĕсем тăрăх, Теруел фронтĕнче пăлхавçăсен лару-тăрувĕ начарланнă май, Италири нумай халăхсенчен Испанине васкасах çар снарйаженийĕсемпе „доброволецсем" йараççĕ. Йанварĕн 23-мĕшĕнче Неапољран (Итали хĕвеланăç çыранĕнчи пысăк порт) Итали салтакĕсене 3 пин çын „паллă мар çĕрелĕ" кăларса йанă.

(ТАСС).

Франци рабочисен делегацийĕ Мадридра

БАРСЕЛОНА, йанварĕн 26-мĕш. (ТАСС). Рабочи-строителсен Францири профсойузĕн делегацийĕ Мадрида çитнĕ. Оборонă ĕçĕнче ĕçлекен рабочисем валљи делегаци хăйĕнпе пĕрле инструментсен пин комплектне тата ĕç вăхăтĕнче тăхăнмали тумтирсене илсе пынă.

Делегаци фронта пырса курнă тата Карабанчелре çамрăксен клубне уçнă çĕрте пулнă, кунта ăна республикă боецĕсем хĕрӳлĕн кĕтсе илнĕ.

Франци территорине фашисла самољотсенчен хӳтлени

ПАРИЖ, 25. (ТАСС). Гавас агенстви çапла пĕлтерет: Франци правителстви пăлхавçăсен самољочĕсем Франци территорийĕ çине бомбăсем пăрахнă пирки Испанири пăлхавçăсен „правителстви" умĕнче татаклă демарш тума йышăннă.

Испанири пăлхавçăсен самољочĕсем Франци территорийĕ çине бомбăсем пăрахнă хыççăн,—тесе пĕлтерет агенствă малала,—Францири çар влаçĕсем чикĕ тăрăхне зенитлă орудисем лартса тухнă, Франци чиккине пăсма хăтланакан самољота кашнинех нимĕн асăрхаттармасăр вăл орудисемпе пемеле.

Францири фашисла организацисем

ПАРИЖ, йанварĕн 26-мĕш. (ТАСС). „Йуманите" хаçат Сампе статйине пичетлесе кăларать. Вăл статйара фашиссен лигисене салатса йарасси çинчен кăларнă декрет ахаљ комеди çеç пулни çинчен кăтартса панă. Салатса йанă мĕн пур фашиссен лигисене урăх йатсемпе çĕнĕрен тунă. Статйа авторĕ суд влаçĕсене малтан „патриотла çамраксен" партийĕ пулнă „республикăла" национал-социалисла парти çине çавăрăнса пăхма хушать, унăн лидерĕ Теттенже пулса тăрать. Теттенже хăйĕн хĕçпăшаллă чаçĕсемпе 1934 çулхи февраљ уйăхĕнче фашисла влаç тума тăнă çĕре хутшăннă. „Республикăлă национал-социалисла парти", Сампе сăмахĕ тăрăх, çурмаçарлă организаци пулса тăрать, унăн айалти звенисене çарти пек йĕркеленĕ.

„Йуманите" хаçат çак фашисла организаци членĕсене хĕçпăшаллантарни çинчен документсемпе фотографи ӳкерчĕкĕсем пичетлесе кăларнă.

Хаçат Францин çар министрне хăй кăтартса панă фактсем çине çавăрăнса пăхма ыйтать.

Лигă наци Совечĕн 100-мĕш çеççийĕ уçăлни

ЖЕНЕВА, йанварĕн 26-мĕш. (ТАСС). Паян ирхине Лигă наци Совечĕн 100-мĕш çеççийĕ уçăлнă. Лару хупă пулнă. Совет администраци тата финанс йенĕпе чылай ыйтусем татса панă.

Килес лару уççăн пулмала тата Совет йышăннă решени тăрăх вăл уçă лару пулать.

Малтисенчен пример илмеле

Кӳлхӗрринчи „Трактор“ колхоз (Вăрнар р.) январӗн 20-мӗшне 1180 лав торф, 1340 лав тислӗк уйа кăларнă, 39 пăт кӗл пухнă, 211 центнер вăрлăх тасатнă. Хальхи вăхăтра вăрлăх тасатас тӗлӗшпе 2 смена организациленӗ. Агрокружок ӗçлет.

Конюхсем лашасене лайăх пăхаççӗ. Вӗсем, лашасене çуракине самăр кăларас тӗлӗшпе пӗр-пӗрин хушшинче ăмăрту договорӗ тунă.

„Ирăр“ колхозра пайанхи куна 2 пин лав тислӗк уйа кăларнă. Вăрлăхсене çурине йахăн тасатнă. Халӗ машинăсене йусама тытăннă. Ку колхозра çуракине хатӗрленес тӗлӗшпе 1-мӗш бригадă малта пырать. Вăл вăрлăхсене тасатса пӗтернӗ, йалхуçалăх машинӗсене йусанă. Уйа 1000 лава йахăн тислӗк кăларнă.

Пушкин йачӗпе тăракан колхоз та çуракине хатӗрленес тӗлӗшпе тăрăшса ӗçлет. Халӗ колхозра хӗрсех тислӗк, торф уйа кăлараççӗ. Кӗл пухаççӗ. Йалхуçалăх машинӗсене йусаççӗ.

Туçи Мăратри „Клевер“ колхоз апла мар пара. Пайанхи куна çитсе те йалхуçалăх машинисене йусама тытăнман. Уйа торф, йӳшкӗне кăларасси асра та çук. Вăрлăхсене тасатас ӗç те сӳрӗккӗн пырать.

Çавăн пекех Хурăн Кăкшăм, Кăмпал, Услапа колхозӗсем те çуракине хатӗрленес тӗлӗшпе начар ӗçлеççӗ.

Райçӗрӗçпайӗ колхозсене çуракине хатӗрленес ӗçре оперативлă йертсе пымасть. Районта малта пыракан колхозсен паха опычӗсене сарса йарассишӗн кӗрешмест.

Н. Козлов.

Ишлей тăрăхӗнче çывăраççӗ

ИШЛЕЙ. Чылай колхозсенче сталинла виççӗмӗш пйатилеткăн пӗррӗмӗш çуракине хатӗрленесси çителӗксӗр пырать. ССР Союзӗн Халăх Комиссарӗсен Совечӗпе ПСК(б) Парти Тӗп Комитечӗ, çавăн пекех тата Чăваш АССР Халăх Комиссарӗсен Совечӗпе ПСК(б) Парти Обкомӗ çуракине хатӗрленесси çинчен йышăннă постановленисене колхозниксем хушшинче сӳтсе-йавман.

„Тӗрӗс çул“ колхозăн кăçалхи çуракинче: тулă 28 гектар, урпа—12, сӗлӗ—36,8, пăрçа-йасмăк—20, кантăр 4, клевер—32 гектар акса хăвармала. Акмалли вăрлăхсенчен пӗрне те тасатса хуман. урпа вăрлăхӗ 25,2 центнер улăштармала, 3,79 центнер клевер вăрри çитмест.

Çавăн пекех йалхуçалăх машинӗсене те йусама тытăнман. Плугăсем тимӗрçӗсен умӗнче йур айӗнче лараççӗ.

Минерал çăпахӗсем кӳрсе килес, çӗре çемçетмелисене хатӗрлес ӗç те çителӗклӗ мар. Мӗн пӳрӗ те фекали—5 центнер, кӗл—6, кайăк-кӗçӗк тислӗкӗ—3 центнер çеç пухнă.

Çуракине хатӗрленес ӗçре нимӗнле агитацие пропагандă тата кулътурлă массăллă ӗç те çук.

Гер. Шчербаков.

Çуракине хатӗрленмен çӗрте

ТРАК (телефонпа). Тосай йалсоветне кӗрекен „Четай“, „Шимар“ колхозсем çуракине хатӗрленес тӗлешпе районра чăрма çук кайа йулса пыраççӗ. Çак колхозсем пайанхи куна çитсе те партипе правителствă çуракине хатӗрленес тӗлешпе йышăннă постановленине сӳтсе-йавман. Икӗ колхозӗнче те иртнӗ çулхи тупăша ӗçкунӗсем тăрăх валеçме тытăнман, ревизи те туса пӗтермен. Çак ӗççене вӗçлесе çитерменни вăл—çуракине хатӗрленес ӗçре питӗ те пысăк чăрмав пулса тăрать.

Райçӗрӗçпайӗ панă план тăрăх „Четай“ колхозӗн 150 гектар çинче йур тытса хăвармала пулнă, 16 гектар çинче кăна тытнă ха. 2500 лав торф кăлармала, 720 лав çеç кăларнă.

Йалхуçалăх машинисене йусамаççӗ, бригадăсенче плугăсемпе сӳресем çителексӗр. Минераллă çăпахсене кӳрсе килесси, выранти çӗре çемçетмелисене хатӗрлесси çинчен яса та илмеççӗ.

Çуракине хатӗрленес тӗлӗшпе бригадăсенче нимӗнле калаçу та туса иртермен. Агроплан туман, агрокружок организацилемен. Кулътмассăллă ӗç те пачах сӳнсе ларнă.

Çавнашкалах „Шимар“ колхозра та ӗçсем калама çук начар пыраççӗ. Колхоз председателӗ Григорйев—„Елӗр çуракине çӗр процентпех хатӗр“,—тесе лăпланса ларать. Лашасене лайăх пăхманнипе начарлатса йанă.

Н. Петров.

Лайăх ӗçленӗ стахановецсене премилерӗç

ВАРНАР. Машинă-трактор станцинче чылай трактор бригадисем пӗр-пӗрин хушшинче социалисăмлă ăмăртупа стахановла йӳхăма анлăн сарса йапипе, калама çук пысăк çитӗнӳсем турӗç. Акă, 3-мӗш бригадă (бригадирӗ Мишаков) кашни трактор пуçне 800 гектар сухалле выранне, 1285 гектар, 9-мӗш бригадă (бригадирӗ Кондратйев) 1050 гектар, 4 мӗш бригадă (бригадирӗ Максимов) 1039 гектар, 14-мӗш бригадă 1000 гектар ытла сухаланă.

Уйрăм трактористсенчен Панфилов йулташ лайăх ӗçлерӗ. Вăл хăйӗн сменинче 700 гектар сухаланă. Кăçал пулакан йалхуçалăх выставкинче тăма тивӗç илнӗ.

МТС дирекцийӗ трактористсем-стахановецсен паха ӗçне шута илсе вӗсене премисем пачӗ. Мишаков йултапа пӗр уйăх курорта (хăй килӗпнӗ тăрăх) йамала. Кондратйева, Максимова, Харитонăвăна 250-шер тенкӗ укçапа, Панфилова патефонпа премилерӗç.

Трактористсем-стахановецсем кăçал тата лайăх ӗçлеме пулчӗç. Мишаков кашни трактор пуçне 1300 гектар сухалама пулчӗ.

Н. Козлов.

Колхоз председателӗсен курсӗ

Шăнкăртам районӗнче, çуракине хатӗрленнӗ май, районри колхоз правлени председателӗсен пилӗк кунлăх курсӗ пулса иртрӗ. Курса районра чи лайăх ӗçлесе пыракан тата пысăк тухăçлă тырпул туса илнӗ „Марс“ колхозра иртерчӗç.

А. Кужиков.

Пысăк хастарлăхпа хатӗрленеççӗ

Шăхасан районӗнчи колхозсенче Киров йачӗпе тăракан колхоз колхозникӗсемпе колхозницисем чӗнсе каланиве сӳтсе-йавас ӗç анлăн саралса пырать.

Ухманти „Победа“ колхозри колхозниксен çак чӗнсе каланине сӳтсе-йавма пуçтарăннă пухувӗ пысăк хастарлăхпа иртрӗ.

— 1938 çулта татах та вăйлă тырпул туса илессишӗн пӗтӗм вăйа хурса кӗрешетпӗр. 1937 çулта вăйлă тырпул туса илни пире пуйан та культурлă пурнăç патне илсе пычӗ. Кăçал кирек мӗнле çанталăк пулсан та вăтамран гектар пуçне 20 центнертан кайа мар тӗштырă, кӗрхи тулă—25 центнер, çӗрулми 200 центнер, ытти тымарçимӗçсем 250 центнер, рекордлă участкăсем çинчен 40 центнертан кайа мар тӗштырă туса илме пулатпăр, терӗç пухăва пуçтарăннă колхозниксем.

„Победа“ колхоз çитес çуракине хастарлăн хатӗрленет. Вӗсем акмалли вăрлăхсене февралӗн 5-мӗшӗнчен 100 процентчӗлех суртласа çитереççӗ. Пайанхи куна 1500 лав тислӗк, 3 пин лав торф, 300 центнер фекали, 120 центнер кайăк-кӗшӗк тислӗкӗ, кӗл 240 центнер, минераллă çăпахсем 10 тоннă кӳрсе килсе хатӗрлесе хунă. Вăрлăха пӗтӗмпех çуса акаççӗ. 370 гектар çине йаровизацилеме, 80 гектар çинче мулчировани тума, 55 гектар çинчи кӗрхи калчана апат пама, 90 гектар çинчи калчана сӳрелеме çирӗп план туса хунă.

Халӗ колхозра агротехникăна тӗплӗн вӗренме 9 агрокружок организациленӗ.

„Победа“ колхозри колхозниксем хăйсем çине илнӗ обйазателстване пурнăçлама, хăйсем пекех вăйлă тырпулшăн кӗрешме „Орешино“ колхозра социалисăмла ăмăрту договорӗ турӗç.

С. Соколов.

Йелчӗксем йерипен ӗçлеççӗ

Йелчӗк районӗнчи колхозсенче çуракине хатӗрленесси кайа йулса пырать. Йалхуçалăх машинӗсене йусас, çӗре çемçетмели йапаласем хатӗрлес, йур тытас ӗçсем ытла та çителӗксӗр пулса пыраççӗ.

Хăшпӗр колхозсенче ку таранах çитсе те вăрлăхсене хывса çитермен. Вăрлăхсене суртласа, вӗсене улăштарассине пуçăнман.

Елпуçӗнчи „Социалисăм“ колхозăн пăрçа, йасмăк вăрлăхӗсем çителӗксӗр. Çуртсăр вăрлăхсене улăштарма тытăнман. Çавăн пекех йалхуçалăх машинӗсене йусассипе нимӗн те тумаççӗ. Уй-хире тислӗк кăларасси, йур тытасси кунта хăй тӗллӗн çеç пулса пырать. Кӗл пухассине организацилемен.

Сталин йачӗпе тăракан колхозра çуракине хатӗрленесси çинчен шутламаççӗ те. Вăрлăхсене суртлама тытăнман. Плугсемпе çейăлкăсене, сӳресене йусаман.

Йанварӗн 19 мӗшӗнче Йелчӗк районӗ çуракине мӗнле хатӗрленнине тӗрӗслеме Тăвай районӗнчен лыжниксен команди килчӗ. Вӗсем Асла Йелчӗкри Ленин йачӗпе тăракан, Патрикелӗнчи „Осоавиахим“ тата район центрӗнчи „Октябер“ колхозсенче пулчӗç. Çак виçӗ колхоз çуракине хатерленессипе нимӗнле конкретлă ӗçсем те туман. Ленин йачӗпе тăракан колхоз иртнӗ çулта Кушкăри „КИМ“ колхозпа ăмăртса ӗçлесе халиччен пулман вăйлă тырпул туса илнипе лăпланса ларнă, çуракине хатӗрленме тытăнман та.

„Осоавиахим“ колхоз та çуракине анăçлăн хатӗрленес тӗлӗшпе нимӗн те тумасть. Ку вăхăта çите тулă вăрлăхне çеç суртласа хунă. Уй-хире торф кăларассине хаклаmaççӗ. Колхоз председателӗ Левый, „халӗ торф шăннă, турттарма неудобнă“, тесе сӳпӗлтетет.

„Октябер“ колхозра трийер ахалех ларать, вăрлăхсене суртлама тытăнман. Районри организацисем колхозсене пулăшас тӗлӗшпе нимӗн те тумаççӗ.

МТС-па райçӗрӗç пайӗнчи хăшпӗр руководителсем иртнӗ çулта тунă çитӗнӳсемпе лăпланса ларнă, колхозсене конкретлă йертсе пымаççӗ. Колхозсенче пулмаççӗ, вӗсен çитменлӗхӗсене мӗнле майпа пӗтермели çинчен конкретлă кăтартусем памаççӗ.

Ф. Майков.

ПСК(б)П Мгински райкомӗ (Ленинград) партире тăман агитаторсен вунă кунлăх курсне организациленӗ. Курсра 97 агитатор вӗренет, пуринчен ытла ССР Союзӗн Асла Советне суйлас кампанийе активлă хутшăннă колхозниксем.

ӲКЕРЧӖК ÇИНЧЕ: Агитаторсен III тата IV-мӗш группиcен занятийӗ. Малта (сылтăмран сулахайала) А. Р. Макаров, А. С. Кудинова, Е. П. Дикусар.

Хитрин фото-ӳкерчӗкӗ (Союзфото).

Парти членӗ çине тимлӗн пăхмала

Сталин йулташ йаланах çынсем çине, парти членӗсем çине болъшевиксемшӗн йут пулса тăракан формалънă, чунсăр-бӳрократла пăхмалла марри çинчен вӗрентсе, асăрхаттарса пырать пире.

Аса илер-ха акă 1937 çулти мартăн 5-мӗшӗнче Сталин йулташ „Партилӗ ӗçӗн çитменлӗхӗсем çинчен, троцкисла тата ытти икӗпитлисене пӗтерес ӗçсем çинчен“ ПСК(б) Парти Тӗпкомӗн Пленумӗнче тунă доклад тăрăх йышăннă решенине. Ку решенире партирен кăларас, йе партирен тӗрӗс мар кăларнисене тепӗр хут парти членӗнче хăвармала тăвас ыйтăва татса панă чухне парти членӗсем çине тӗплӗн, кашни патне уйрăмăн пырса пăхма кирли çинчен питӗ уççăн та ăнланмалла çапла каланă:

„Пирӗн партири хăшпӗр руководителсем „йединицăсем“ çинчен, партин уйрăм членӗсем çинчен, вӗсен кунçулӗ çинчен тăрăшмасăр, йалан вуншар пинӗн шухăшлама тăрăшаççӗ. Пирӗн парти пысăк, партирен кăларнă вуншар пин çын парти пурнăçне мӗн чухлӗ те пулин улăштарма пултараймасть, тесе хăйсене йăпатса, партирен пиншер тата вуншар пин кăларассине вӗсем нимӗн выранне те хумаççӗ. Анчах парти членӗсем çине çапла пăхма партийе ăшранах хирӗçле çынсем кăна пултараççӗ.

Çынсем çине, парти членӗсемпе парти работникӗсем çине çапла чунсăр пăхнине пула, партин пӗр пайӗнче кирлӗ мар çӗртенех „камăлсăрлăхпа тарăху пулса тăрать.

Троцкисла икӗпитлисем, вара çавăн пек тарăхнă çынсене ваштакăн çаклатса илеççӗ те вӗсене хăйсем хыççăн троцкисла сăтăрлăх лачакине сӗтӗрсе кайаççӗ.“

ПСК(б) Парти Тӗпком Пленумӗ парти организацисем коммунисcене партирен кăларнă чухнехи йăнăшсем çинчен, партирен кăларнисен апелляцисем çине формалънă-бӳрократла пăхни çинчен тата çав çитменлӗхсене пӗтермели майсем çинчен йышăннă решени вăл пирӗн чăваш парторганизацине те пӗтӗмпех тивет.

Халăх тăшманӗсене—троцкисла-бухаринла шпионсене, сăтăрçӗсене икӗпитлисене парти ретӗнчен хăваласа кăларса ответ тытарнипе пӗрлех, пер айăпсăр çынсене парти ретӗнчен кăларни те сахал пулман.

Акă Шупашкар хулинчи пуçламӗш парторганизацисене илсе пăхар. Кунта коммунисcем çинчен панă жалăбăсене тӗплӗн тӗрӗслесе тухмасăрах коммуниссене парти ретӗнчен кăлара-кăлара пăрахнисем сахалах пулман. Ӗç çине çамăлттайла, чиновник-бӳрократла пăхакан карйерис-коммуниссем хăйсен сийенлӗ ӗçне тума тăрăшнă.

Канашпа—Шупашкар хушшинчи чукунçул строителствинчи парторганизаци парти членне, Рева Ф. йулташа „Парторганизаци хушнине итлемест, рабочисен хушшинче кулътмассăллă ӗçе организацилемест“, тесе парти ретӗнчен кăларса пăрахнă. Пуçламӗш парторганизаци хăй Рева йулташа ӗçре пулăшса пыманнине аса та илмен. Рабочисем хушшинче кулътмассăллă ӗç организацилемелине пӗтӗмпех ун çине йăвантарса тӗрӗс мар решени йышăннă.

Рева йулташ ӗçне парти хула комитечӗ пăхса тухса, ăна парти ретӗнчех хăварнă. Анчах пӗр айăпсăр çынсене парти ретӗнчен кăлармала выляакансем пирки нимӗнле мерă та йышăнман.

Çавăн пекех акă Милютински хăма çуракан заводри пуçламӗш организаци парти кандидачӗ Андреичев К. йулташ пирки тӗрӗс мар решени йышăннă. „Андреичев парторганизаци хушнине тумасть“, тесе парти ретӗнчен кăларнă. Анчах ку решени пӗтӗмпех тӗрӗс мар решени пулнă, вăл нихçан та парти организаци хушнине итлмесӗр тăман. Халӗ хула комитечӗ Андреичев йулташа парти ретӗнчех хăварнă.

Çакăнта кăтартнă фактсем—хăшпӗр парторганизацисем партирен кăларас ӗç çине çăмăлттайла, чиновникле-бӳрократла пăхни çинчен каласçӗ. Партирен кăларасси çине çавăн пек пăхакан çынсем пирӗн партишӗн сийенлӗ ӗç тăваççӗ. Çавăн пек çынсем пирки ПСК(б)П хула комитечӗн тивӗçлӗ вывăд тумала.

ПСК(б)Парти Тӗпкомӗн Пленумӗ мӗн пур парти организацисемпе вӗсен руководителӗсене парти массисен болъшевикла сыхăлăхне мӗн май пур таран ӳстерсе пыма партин ирӗклӗ тата ирӗксӗр тăшманӗсене пурне те тăрă шыв çине кăларса тӗпӗ тымарӗпех кăклаcа пӗтерме хушать.

Н. Косойкин.

Финанс активӗ—кулленхи ӗçри шанчăклă тӗрек

Шупашкар хули 1937 çулхи финанс планне ăнăçлăн тултарчӗ. Иртнӗ çулăн IV-мӗш кварталь планне 129 процент, çулталăк планне 110,6 проц. тултарнă. Плана ытлашши тултарнă хисеп 409 пин тенкӗ шутланать. Ку укçа ирӗклӗ тӳлевсем тата çирӗп йӗркепе тӳлемели государствă налогсем тăрăх пухăннă.

Иртнӗ çул финанс планне çирӗп тӳлевсем (налогсем) тăрăх çеç мар, ирӗклӗ тӳлевсем тăрăх та лайăх тӗслӗхсемпе вӗçленӗ. Уйрăмăнах перекет кассине укçа хурасси ӳссе пыни хаваслантарать. Шупашкар хулинчи перекет кассисенче 1934 çулхи йанвар уйăхӗнче 700 пин тенкӗ, 1937 çулхи йанвар уйăхӗнче 1813 пин тенкӗ пулнă. 1938 çулăн йанварӗн 1-мӗшӗнче 2537 пин тенкӗ шутланнă. Хулари перекет кассисене укçа хывнисен хисепӗ 7000 çын ытла. Çак тӗслӗхсем вӗсем ӗççыннисен пурнăçӗ кунран-кун лайăхланса пынине кăтартаççӗ.

Шупашкар хули совечӗн финанс пайӗ, 1937 çулхи плана мӗнле меслетсемпе ӗçлесе ăнăçлăн тултарма пултарчӗ-ха?

Паллах, кирек мӗнле ӗçе те организацилеме, йӗркелеме кирлӗ. Ӗç хăй тӗллӗн пулмасть. Пирӗн кулленхи ӗçӗн тӗп меслечӗ вăл—социалисăмла ăмăрту, массăна ăнлантарса пани, актива ӗçе анлăн хутшăнтарни. Шупашкар хула совечӗн финанс пайӗ пӗлтӗр Улатăр хулипе Саранск хули (Мордва АССР) совечӗсен финанс пайӗсемпе ăмăртса ӗçленӗ. Вăл договăра хулари финанс активӗн канашлăвӗнче сӳтсе-йавса çирӗплетнӗ. Договăр пурнăçа мӗнле кӗрсе пынине тӗрӗслесех тăнă. Договăрсене тӗрӗсленӗ хыççăн, финанс работникӗсен производствăллă канашлăвӗсенче сӳтсе-йавнă.

Хулари финанс активӗнче 200 çын. Кунта килхуçи арăмӗсем, общественлă инспекторсем, финанс йенӗпе ӗçлекен контроль постисем, займ укçи пухас тӗлӗшпе, пурнăçа тата пурлăха страхлас йенӗпе ӗçлекен уполномоченнăйсем, комсод членӗсем тата предприйатисемпе учрежденисенче шут ӗçне туса пыракансем.

Хулари финанс пайӗн работникӗсем финас активӗпе таччăн çыхăнса ӗçленӗ. Финанс активӗ финанс пайӗн ӗçӗнчи çитменлӗхсене пӗтерсе пыма, финанс планне тултарма хастарлăн пулăшса пынă. Финанс активӗ хушшинче кулътурлă массăллă ӗçе те тивӗçлипе йӗркелеме тăрăшнă.

Финанс активӗн канашлăвӗсем хыççăн, канашлăва пынисене кино кăтартнă, концертсене илсе кайнă. Уйрăмăнах финанс активӗ ӗçне çула пысăк хаваслăхпа кӗтсе илчӗ. Вӗсем савăнăçлă кас турӗç. Вӗсем 1937 çулта тунă çитӗнӳсемпе савăнчӗç. Ӗçентерӳсем тăвасинче вӗсем хытă кӗрешнӗ, нумай ӗçленӗ. Çавăнпа савăнчӗç те вӗсем.

Массăна финанс ыйтăвӗсем тăрăх ăнлантарса парас ӗçре епер радиопа тата хаçатсемпе анлăн усă курнă. Финанс планне мӗнле тултарса пыни тата умра тăракан задачăсем çинчен кашни кварталтах 2-3 хут радио тăрăх докладсем туса панă. Кунсăр пуçне радио тăрăх финанс пайӗн инспекторӗсем, общественлă инспекторсем, килхуçи арăмӗсем, финанс активисӗсем хăйсен ӗçӗнчи паха опытсем çинчен каласа панă, ыттисене хăйсем пек ӗçлеме чӗннӗ.

Финанс планне тултарас ӗçре урам комитечӗсен стена хаçачӗсем те нумай пулăшу панă.

Нумайах пулмасть хулари финанс активӗ Чубарь йулташ чӗнсе каланине сӳтсе-йаврӗ. Чубарь йулташ хăйӗн сăмахӗнче финанс активӗ умӗнче çӗнӗ пысăк задачăсем лартрӗ. 1938 çулта финас ӗçӗнчи пахалăх иртнӗ çулхисенчен чылайах çӳлӗ выранта пулмала. Финанс пайӗнче ӗçлекенсем, финанс активисӗсем Чубарь йулташ чӗнӗвне пурнăçа кӗртсе пыма çирӗп обйазателствăсем илчӗç. Финанс планне кашни уйăхрах, кашни кварталтах ăнăçлăн тултарса пыма пирӗн пур кирлӗ условисем те пур.

1938 çулти финанс планне, бюджета пурнăçа кӗртесси, халăх, государствă укçа-тенкине упраса, перекетлесе тыткаласси, унпа йӗркелӗ усă курасси—пысăк, ответлă ӗç пулать. Пирӗн кăçал финанс актив йышне тата ытларах ӳстерессишӗн, вӗсем хушшинче финанс ударникӗсен, отличниксен шутне йышлăлатассишӗн татах та хытăрах тăрăшмала.

1938 çулта социлисăмлă ăмăртăва анлăраххăн сарасси—чи паллă ӗçсенчен пӗри пулать. Шупашкар хула совечӗн финанс пайӗ кăçал та, иртнӗ çулхи пекех, Улатăр хулипе Саранск хули совечӗсен финанс пайӗсемпе ăмăртăва тухрӗ. Ку ăмăртăва хула активӗ хутшăнчӗ.

1938 çулăн 1 мӗш кварталӗнче пысăк ӗçсем тăраççӗ: 1938 çулхи налог кампанине йӗркелӗн иртермеле; „ССР Союзӗн обороние çирӗплетмели займ“ укçине пухса çитермеле; 1938 çул валли бюджетсем тумала, т. ыт. те. Çаксем енте финанс активӗ чи малтан тумалли ӗçсем.

Золотников.

Шемшерти болъницă

Çӗр çул ӗлӗкрех Шемшерте кирпӗчрен шурăпа сăрласа, хӗрессене ылтăнлатса пысăк чиркӳ туса лартнă. Çак ӗçхалăхӗн ăс-тăнне мăкатакан, пуçсемпе кулаксене услам паракан çурта чума патша самани кулаксемпе тата купецсемпе пӗрле мӗн чухлӗ укçа-тенкӗ тăкакланине хальхи вăтă çынсем те астăваймаççӗ, анчах вăтăр-хӗрӗх çул ӗлӗкрех Есекасси йалӗнчи кулак Кирук йатарласа Чулхулана кайса чиркӗвӗн пысăк чанне 204 тенкӗ ытăч укçа тӳлесе кӳрсе килнине лайăх астăваççӗ. Унсăр пуçне, чиркӳ çывăхӗнчех Смирнов кулак хăй пӳрчӗн айалти хутӗнче пысăк хупах уçнине, йалсенче халăх çӗрӗсене сутса талăкӗ-талăкӗпе ерех ӗçнине те манман. Шемшерте арман хуçи пулнă Андриан Павлов хăй пӗччен пекех Шушăлта хăйӗн тата арăмӗн йачӗпе (Унтрйанна Натали) йăвăçрай чиркӳ тутарнă. Мӗн чухлӗ укçа тăкăннă ӗçхалăхне пусмăрламалли çуртсем тунă çӗрте!

Çав хушăрах тавралли йалсенче халăх шкулсăр ларнă, уйрăмах чухăнсем вырăлă-тутлă пурнăçпа шурăпса час-часах чирленӗ. Чирленӗ те, пиçта нимӗнле те емелленме пӗлмесӗр пайтах вилнӗ. Ăна çак цифрăсем те аван кăтартса параççӗ: 1898 çулта (Шемшерте фелъдшер пунктне уçнă çул) хальхи Шемшер йалсоветне кӗрекен йалсенче пӗр çулталăк хушшинче 52 ача çуралнă. Çак хисепрен 27 ача иккӗ-виçӗ çула çитиччен вăрвитти йе ытти чирсемпе чирлесе вилнӗ. Унсăр пуçне, çав 52 ачаран вилмесӗр йулнисенчен 30 çынӗ совет власӗ пуличченех вилсе пӗтнӗ. Болъницă тавралӗ пулман, чирленисене сыватма Шупашкара çитиччен (30 километра йахăн) каймала пулнă. Ун чухне Шупашкара кайма та хăранă, мӗншӗн тесен шурă-кăвак пиртен çӗлесе тăхăннă чăвашсенчен хулана çитиччен хытă мăшкăланă, хӗсӗрленӗ. Çавăнпа та йалсенче вӗсен-сурапа, кӗсӗпе, вăрвит типе, трахомпа т. ыт. чирленисем пайтах пулнă. Чиркӳ, хупах тума пайтах укçа-тенкӗ тăкакланă хушăрах шкулпа болъницă усма укçа-тенкӗ „тупăнман“ кулаксен.

Хӗрӗх çул кайарах темӗнле майпа Шемшерте фелъдшер пунктне уçмала тунă. Ытла та мӗскӗн пулнă-ске ун чухнехи фелъдшер пункти. Халăх сывлăхне сыхламалли пункт валли пӗр пӗчӗкрех йăвăç çурт та тупăнман, уйрăм çын патӗнче хватер панă, ăна та кайри пӳртре кăна. Фелъдшер пунктне уçассине те йачӗшӗн кăна уçнă пулмала, мӗншӗн тесен унта кӗçӗ маçӗсӗр пуçне урăх нимех те пулман. Пӗр 25 çул ӗлӗкрех фелъдшер пунктинче ӗçленӗ Михайлов фелъдшер емел ыйтма пыракансене тӳрех:

— Пурак илсе килтӗн-и мӗн? Маçсарайӗнче (кӗçӗ маçӗ ӗнтӗ. Н. К.) кай, анчах нумай ан ил, урапана ан сӗр...—тенӗ. Чăнах та, лупасайӗнче пӗр пысăк катка кӗçӗ маçӗ ларнă.

Ие тата Михайлов фелъдшерпа Иамбулатовăри Марийа Семеновă хӗрарăм хушшинче çакнашкал ӗç пулса иртнӗ: Михайлов чăвашла пӗлмен. Марийа Семеновă вырăсла пӗлмен. Вырăсла пӗлменнисенчен Михайлов пӗрмайах мăшкăланă, кулнă. Михайлов Иамбулатовă хӗрарăмне паллана пулсан та, йал йатне ыйтнă.

— Акулево что ли?

— Акулево,—тенӗ хӗрарăм.

— Ямбулатово что ли?—каллех ыйтнă фелъдшер.

— Иамбулатовă,—тенӗ хӗрарăм нимӗн калама аптранипе.

— Акулево, да?—тӗпчене Михайлов.

— Акулево,—тенӗ каллех хăраса ӳкнӗ хӗрарăм.

— Акулево-Акулево, Ямбулатово-Ямбулатово... марш отсюда!..—ура тапса кăшкăрса вăрçса кăларса йанă емел ыйтма пынă хӗрарăма. Тухса кайнă вара нимӗнсӗрех.

Кулаксемпе кантур таврашӗсем кăна фелъдшер патне нимӗн хăрамасăр çӳреме пултарнă. Чухăнсем кӗçӗ маçне те сăмахсăр, мăшкăлсăр илсе тухайман.

Çавнашкал пулнă ун чухне. Ахальтен мар ун чухне фелъдшер патне пӗр кун хушшинче 3—4 çынран ытла пыман. Çавнашкал йӗрке Октяберти социалисăмлă революциччен пынă. Выранти çамрăк совет власӗн болъницăсемпе шкулсем çине тивӗçлипе çаврăнса пăхма вăхăчӗ те пулман, мӗншӗн тесен çамрăк совет çӗршывне йутçӗршыв интервенчӗсемпе шурагвардейцăсенчен сыхласси чи пысăк задач пулнă.

Çапах та, пурнăç çăмăлах пулман пулсан та, 1918—19 çулсенче Шемшерте болъницă уçаççӗ. 3 чирлӗ çынна выртармалăх стационар йӗркелеççӗ. Анчах емелсем пулман, выранти материалсемпе емелсем тукаласа çавах та пулăшу панă.

1926 çулта Советсен вулăсри сиеçӗ йышăннипе, хамăр республикăри тӗп учрежденисене представителсем йарса стационар валли уйрăм çурт илсе памала тăваççӗ. Вара унтанпа болъницă аслăлатнă, чăвашсенчен тухнă врачсемпе фелъдшерсем ӗçлеме тытăнаççӗ.

Хальхи вăхăтра Шемшерти болъницă калама çук пысăк выран йышăнса тăрать, мӗншӗн тесен Шупашкар районӗнче пӗртен-пӗр болъницă çеç, вăл—Шемшерте. Ăна малтанхи фелъдшер пунктипе танлаштарса пăхсан, мӗн тери пысăк уйрăмлăх тăнине куçкӗски çинчи пек куратăн. Малтан чăвашла калаçма пӗлмен, çитменнине çын йевӗрлӗ калаçма пӗлмен фелъдшерсем выранне халӗ совет институчӗсенчен вӗренсе тухнă чăваш врачӗсем ӗçлеççӗ. Хаљ ӗçлекен врач Василий Демидович Шемшер хресчен ывăлӗ, малтан совет учрежденисенче ӗçленӗ, унтан çемйелӗскерех (арăмӗ, тăватă ача) Шупашкара медицинă рабфакне вӗренме кайнă. Кайран Хусанти медицинă институтӗнчен вӗренсе тухнă.

—Епӗ тахçанах медицинă йенӗпе вӗренесшӗнччӗ. 1916 çулта Хусана кайса фелъдшерсен шкулне те кӗтӗм, анчах, атте мана вӗрентме 80 тенкӗ тӳлеме вăй çитерейменнипех вӗренеймерӗм.—тет Василий Демидович.

Совет власӗ пулсан кăна ӗççыннисемшӗн институтсен алăкӗсем йари уçăлчӗç. Ахальтен мар совет власӗ вăхăтӗнче икӗ Шемшерӗпе 6 çын врача вӗренсе тухрӗç, вӗсенчен пӗри Мускаври медицинă академине пӗтернӗ.

Шемшерти болъницăна Шупашкар, Сӗнтӗрвăрри тата Çӗрпӳ районӗсенчи йалсемпе колхозсенчен çӳреççӗ. Çавсене шута илсе болъницăна аслăлатмалах пулнă. Халӗ 15 чирлӗ çынна выртармалăх стационар пур, 5 çынна выртармалăх ача çуратмалли уйрăм. Болъницăра пӗр врач, икӗ фелъдшер, пӗр акушеркă, пӗрре трахçестра тата санитарсемпе сестрасем ӗçлеççӗ. 40 çул ӗлӗк фелъдшер пункти валли уйрăм йăвăç çурт лартса пама та хӗрхеннӗ пулсан, пӗлтӗр Шемшер болъници халăх сывлăхне сыхлас çӗре 72.600 тенкӗ расхутланă. Йалсене тухса профилактикăла ӗçсем нумай тунă: Халь болъницăна кунсерен 50—60 çын пырать.

—Халь ӗçлеме те интереснă,—тет Василий Демидович.—хамăр çынсене, колхозниксене емелленине пӗлсе тăнипе савăнатăн. Кунта хирург та, гинеколог та, терапевт та пулас пулать, анчах болъницăна правителствă тата халăхсем хăйсем те пулăшса пынине куратăн та, ӗçленӗ семӗн тăрăшса ӗçлес килет. Епӗ лайăх астăватăп, 1926 çулта Советсен вулăсри сиеçӗ болъницăна аслăлатас ыйтупа Шупашкара тӗп учрежденисене мана представител туса йанăччӗ, ун чухне стационар валли уйрăм çурт илсе панăчӗ. Халӗ çак болъницăра хамăн врач пулса ӗçлемеле пулчӗ. Ӗмӗтленнӗ ӗмӗт пурнăçа кӗнишӗн мӗншӗн савăнмала мар-ха...

К. Н.

Халĕ те пĕр вырăнтах тапăртатаççĕ

ЙĔПРЕÇ. Вăрманпромхоз вăрман хатĕрлев ĕçĕпе пĕррĕмĕш кварталта та ĕлĕкхи пекех ĕçлесе пырать. Кварталăн планне пайанхи куна хатĕрлессипе—8,6 процент, турттарассипе 8,7 процент çеç тултарнă. Плана срукра тултарас тесен, вăрманта кашни кун 1695 çурран çын, 2020 çын лашапа, механизациллĕ çул çинче 3 трактор, 9 автомашина ĕçлемеле. Пайанхи куна 199 çурран çын, 295 çын лашапа, 4 автомашина çеç ĕçлеççĕ. Çакă çитменлĕх вăрманпромхоз руководителĕсем ĕç вăйне организацилессипе ĕçлемĕн пирки пулнă.

Йĕпреç йалсоветĕнчи Сталин йачĕпе тăракан тата „Правда“ колхозсем ытла та начар ĕçлеççĕ. „Правда“ колхозăн пĕррĕмĕш кварталта 4250 кубла метр хатĕрлемеле, 2535 кубла метр турттармала пулнă. Йанварĕн 20-мĕшне 118 кубла метр çеç турттарса кăларнă. Пайанхи куна ку колхозран вăрманта лашапа ĕçлекенсем пачах çук, çуранисем 6—7 çын çеç ĕçлеççĕ. Колхоз правлени председателĕ Карпов колхозниксене вăрман ĕçне организацилеме вăхăт тупайман.

Çавăн пекех „Шурăмпуç“, „Болъшевик“, „Хĕрлĕ металлист“, Буденный йачĕпе тăракан колхозсем те вăрман хатĕрлев планне тултарассипе начар ĕçлесе пыраççĕ. „Болъшевик“ колхозăн 1-мĕш кварталта 2600 кубла метр хатĕрлесе, 1620 кубла метр турттармала пулсан, вăл пĕр кубла метр та хатĕрлемен, турттарса та кăларман. Кун пек колхозсем районĕпе 21 шутланаççĕ. Çапах та вăрманпромхоз вăл колхозсемпе ĕçлемест.

Çав вăхăтрах вăрман хатĕрлевĕнче паха тĕслĕхсем кăтартакан колхозсем те пур. Ку шутра „Çисĕм“ колхоз пĕллă вырăнта тăрать. Вăл пĕрремĕш квартал планне хатĕрлессипе те, турттарассипе те çурри ытла пурнăçланă. Колхозниксем плана срукчен тултарасшăн тăрăшса ĕçлеççĕ.

Уйрăмăнах вăрманта ĕçлесси йединоличниксем йенĕпе йапăх. Вырăс Тимеш, Савка, Çĕнĕ Мăрат, Чăрăшкасси, Хырхĕрри йалсовечĕсем квартал планне пĕр процент та тултарман. Чăваш Тимĕш йалсовечĕ 1660 кубла метр хатĕрлесе, 1470 кубла метр турттарас вырăнне, йанварĕн 20-мĕшне пĕтĕмпе те 59 клубла метр çеç хатĕрленĕ, 78 кубла метр çеç турттарнă.

Вăрманпромхозра ĕçлекенсем стахановла йухăма сарса пырас вырăнне, ăна путарса пыраççĕ. Пайанхи куна вăрман ĕçĕпе миçе йалсовет, колхоз ăмăртса ĕçлени палла мар. Вăрманпромхоз хăй те ăмăртса ĕçлемест. Стахановецсем пит те сахал. Вăрманпромхозĕпе мĕн пурĕ те 28 стахановец çеç. Вĕсем хушшинче те тивĕçлипе ĕçлемеççĕ. Березинпа Дружинин бригадирсем йаланах лайăх ĕçлеççĕ. Çак бригадăсенчи стахановецсем кулленхи нормăсене 150—160 процент тултарса пыраççĕ. 1937 çулти декабĕр уйăхĕнче Березинпа Дружинин бригадисенчи рабочисем кашнийех 600—700-шер тенкĕ ĕçлесе илнĕ. Кармала вăрманпунктинчи Йумашев бригади те вăрман турттарас плана 150 процент тултарса пырать. Анчах вăрманпромхозĕ стахановецсен ĕçĕнчи паха тĕслĕхсене ытти рабочисем хушшине сарассипе ним те тумасть.

Вăрман хатĕрлев планне тултарасси сÿрĕккĕн пынишĕн сутуилÿ организаципе (Леспродторг) рабочком та айăплă. Кусса çÿрекен лайоксем организацилемен, столовăйсем начар ĕçлеççĕ, кунта кулътмассăллă ĕçе те начар организиленĕ. Вăрманпромхозĕпе 25 барак шутланать. Кашни барак çумне кулътмассăллă ĕçе туса пыма коммуниссемпе комсомолецсене тата лесниксене çирĕплетнĕ. Анчах вĕсем питех те начар ĕçлеççĕ. 16-мĕш баракри Василйев техноруkпа Семенов деçатник çеç рабочисем патĕнче пулса хаçат-журналсем вуласа, çĕнĕ хыпарсене каласа параççĕ. Хăшпĕр бараксенче (54-мĕш баракра) хаçат-журналсем вулама сĕтел те çук. Рабочисене вĕретнĕ шыв кирлĕ, анчах баксем çук. Первомайски вăрман пунктĕнчи хĕрлĕ кĕтес хупăнса ларать. Черноречески вăрман пунктĕнчи столовăйра чей ĕçме стакансем те çитмеççĕ, столовăйра мĕн пурĕ те 3—4 стакан çеç. Çавна пула рабочисем стакан кĕтсе черетре тăрса чылай вăхăт иртереççĕ.

Вăрманпромхоз çумĕнчи „Леспродторг“ рабочисем валъли кирлĕ таварсене çитерĕксĕр тăрать. Пулă, мануфактура, тăхăнмали тумтирсем сахал. Пуррисем те базăра „кум хăтасем“ хушшинче сутăнса пĕтеççĕ.

Керкуннехипе хĕллехи вăрман хатĕрлев планне тултарассине пĕррĕмĕш квартал татса парать. Квартал планне тултарма пур условисем те пур. Стахановла йухăма сарса йани çеç кирлĕ. Районри партипе совет организацисен вăрман ĕçĕ çине тивĕçлипе çавăрăнса пăхса тăтăклă пулăшусем памала. Йулса пыма нимĕнле сăлтав та çук.

Дм. Михайлов.
Гл. Марушев.

ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Сталино хулинчи Артĕм йачĕпе тăракан урамри сквер кĕтессĕ (УССР, Донбасс).

Ф. Кислов фото-ÿкерчĕкĕ (Союзфото).

Райĕçтăвком членĕн кунçулĕ

Райĕçтăвком членĕсене ĕçре вĕрентсе пырасси çинчен райĕçтăвком пленумĕнче, канашлăвĕсенче сахал мар калаçнă, калаçççĕ те. Анчах чылай чухне вăл пуш халап кăна пулса тăрать. Çакна епĕр уççăнах Шăнкăртам райĕçтăвком ĕçĕнче курма пултаратпăр.

1934 çулта, Советсен районри сиесĕнче райĕçтăвком пленумне 17 член, 6 кандидат суйласа хăварнă пулнă. Кайрантарах тата 3 член хушса суйланă. Райĕçтăвком Чăваш АССР Тĕпĕçтăвкомне „пирĕн райĕçтăвком пленумĕнче пурĕ 23 çын, вĕсенчен членсем 20 çын“, тесе пĕлтерет. Ăçта кайса кĕнĕ тепĕр виçĕ çын? Вĕсене пленумран кăларнă, тесе ĕнентереççĕ райĕçтăвком работникĕсем. Тĕплĕнрех пăхсан, ĕç пĕре те апла мар: вĕсем пленум членĕсене çĕтерсе пĕтернĕ, хăшне-пĕрне йурийех райĕçтăвком ĕçĕнчен айаккарах сирме тăрăшнă.

Иҫазова Рахимăна 1934 çулта пулнă Советсен районри 3-мĕш сиесĕнче райĕçтăвком членне суйласа хăварнă. Унчухне вăл Тат Шурут йалсовет председателĕ пулнă. Вăл—районри йалсовет председателĕсен хушшинчи пĕртен-пĕр хĕрарăм пулнă. Вăл парти членĕ, активиска.

Иҫазова йулташа райĕçтăвком членне суйланăранпа 3 çул иртет. Анчах вăл пĕре те райĕçтăвком членĕн прависемпе усă курман. Райĕçтăвкома йертсе пыракансем, ăна çав правасене йурийех парасшăн пулман. Ăна райĕçтăвком членĕнчен кăларнă, тесе суйа самахсем сарнă. Хăçан кăларнă? Мĕншĕн? Çак ыйтусемпе никам та интересленмен, чăнлăха пĕлесшĕн тăрăшман. Ăна райĕçтăвком пленумне чĕнме пăрахнă. Ансăртран пленума лекме пултарнă пулсан та, ăна тĕрлĕрен ыйтусене сÿтсе-йавса, решенисем йышăннă чухне сасăлама ирĕк паман. Шăп 1936 çулччченех çакăн пек чăсăлнă ку ĕç.

1936 çулта Иҫазова йулташ Шупашкара пĕр çуллăх курса килет. 1937 çулта, курсран вĕренсе тухнă хыççăн, каллех Шăнкăртам районне ĕçлеме кайать. Ăна районри партипе совет организацийĕсем библиотекăна ĕçлеме йараççĕ. Анчах вăл каллех: мĕншĕн-ха мана райĕçтăвком пленумне чĕнмеççĕ,—тесе шухăшлать. Мĕншĕн чĕнмеççĕ? Райĕçтăвком членĕнчен чăнах кăларнă-ши? Çакăн çинчен пĕлме вăл темиçе хутчен те тытăннă. Анчах ĕçе вĕçне çитиччĕнех тĕпĕ-йĕрипе тĕрĕслесе тухма йăвăр пулнă, мĕншĕн тесен, райĕçтăвкома йертсе пыракансем: „сана райĕçтăвком членĕнчен кăларнă“,—тесе ĕнентерсех калана. Апла пулсан, тĕрĕслемели те çук, кăларнах пулĕ“,—тесе шухăшлама тытăннă вара Иҫазова йултăш та.

Шăнкăртамра партипе совет организацисене йертсе пырас ĕçре тăшмала сыисем ларнă. Вĕсене ĕçрен таватнă. Халĕ унта çĕнĕ çынсем ĕçлеççĕ. Анчах çĕнĕрен лартнă çынсем те демократипе пурнăçа кĕртес ĕçре пыма кирлине тивĕçлипех ăнланса илмен-ха. Вĕсем те çĕтерсе пĕтернĕ райĕçтăвком членĕсене тупма тăрăшман. Çитменнине вĕсем ку тĕлĕшпе кивĕ работниксен çулĕ çинех тăнă.

1938 çулти йанварĕн 8-мĕшĕнче райĕçтăвком пленумĕ пухăннă. Ытти членсемпе пĕрлех: „халĕ ĕнтĕ тупнă йăнăша тÿрлетнĕ пулĕ“,—тесе Иҫазова йулташ та пленума пынă. Анчах вăл ĕмĕтленнĕ ĕмĕт пурнăça кĕмен. Ака сасăлама пуçларĕç. Пленум председателĕ: „Райĕçтăвком членĕсем çеç сасăлаççĕ“,—тесе пĕлтерчĕ. Членсем пурте алă çĕклерĕç, Иҫазова йулташ та çĕклерĕ. Çав вăхăтрах залăра такам кăшкăрчĕ: „Иҫазова йалсовет райĕçтăвком членĕ мар!“—терĕ. Иҫазова аллине илчĕ, хыттă пăшăрханчĕ. Çавăнтах тепри Иҫазова и. райĕçтăвком членĕнче тăнине документсемпе ĕнентерме тытăнчĕ. Анчах тавлашни ахалех пулчĕ. „Васкавла“ çынсем чăнлăха тĕрĕслесе тупасшăн пулмарĕç, Иҫазована сасăлама ирĕк памарĕç.

Хăçан пĕтет ку мăшкăл? Иҫазова йулташа райĕçтăвком членне Советсен районри сиесĕ суйласа хăварнă, ăна райĕçтăвком пленум членĕнчен никам та кăларман. Райĕçтăвкома йертсе пыракансен çакна лайăх пĕлсе тăма кирлĕ.

Шăнкăртам райĕçтăвкомĕнче кун пек тĕслĕхсем татах та пулнă. Çавăн пекех вĕсем „пассивлă“ тесе Чăнге Найме йулташа темиçе хут та райĕçтăвком членĕнчен кăларма тăнă. Чăнге Найме йулташ—активлă колхозница. Вăл ĕçлесшĕн тăрăшать, ăна пулăшса пырас пулать. Райĕçтăвком членне Аталазова Марфăна та пленума чĕнмеççĕ. Аталазова йулташа райĕçтăвкома хире-хирĕçех тенĕ пек сывăхра пурăнать пулсан та, ăна райĕçтăвкомăн кулленхи ĕçне хутшăнтармаççĕ. Шăнкăртам районĕнчи çакăн пек çитменлĕ ĕçсене халех пĕтерес пулат. Депутат вăл—халăх тарçи, халăх шанса суйланă çын, тесе вĕрентет Сталин йулташ. Пирĕн çакна пĕр самантлăха та манма йурамасть. Суйланă депутата суйлавçăсем çес кăйалачĕнсе илме пултараççĕ, урăх никам та мар.

Йа. Муратов

Çеçси ĕçĕсене вĕренеççĕ

Шупашкар районĕнчи пур колхозсенче те ССР Союз Аслă Совечĕн пĕрремĕш Çеççин кашни кунхи ĕçĕсене пысăк тимлĕхпе асăрхаса пыçĕç. Халĕ пур çĕрте те Çеççин ĕçĕсене вĕренеççĕ.

Сарăпакасси йалсоветне кĕрекен колхозсенче кашни каçах вулав çуртне, колхоз правленисене пухăнса Çеççи ĕçĕсем çинчен калаçусем туса иртереççĕ, унăн решенийĕсене вĕренеççĕ, депутатсен сăмахĕсене сÿтсе-йаваççĕ. Колхозниксем ĕлĕкхи пурнăççемпе хаљхи пуйан та савăнăçлă пурнăçăн примерĕсемпе танлаштарса пăхаççĕ. Çеççи ĕçне вĕренес тĕлĕшпе йалсоветĕнче кружоксем ĕçлеççĕ.

Ĕççынnисем пурте совет правителствине ырласа саламлаççĕ.

С. Воробйов.

Кулътармейецсем уйăрнă

Вăрнар вăрманпромхозĕнче хут пĕлменнисене вĕрентес тĕлĕшпе уйрăм кулътармейецсем ĕçлеççĕ. Вĕсем пурте пĕр пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ. Уйрăмăнах хут пĕлменнисене вĕрентес ĕçре Захарова, Ананийев, Сазонова тата Петрова йулташсем ăмăрту договорĕнче кăтартнă пунктсене тĕплĕн пурнăçласа пыраççĕ.

А. Андрейев.

Чăвашла кĕнекесем çук

Шупашкарти колхоз кадрсене хатĕрлекен шкулта вĕренекенсем чăваш чĕлхипе кăларнă илемлĕ литература вуласшăн, анчах вăл кĕнекесем шкул библиотекинче çук. Акă епĕ Островскин „Тăвăлпа çуралнисем“ йатлă романне илсе вулас тесе библиотекăна темиçе хут та çитрĕм, мана вăл кĕнекене тупса памарĕç.

А. Гаврилов.

Чăваш курсанчĕсем йурлаççĕ

Ленинград çар округĕнчи №-лĕ шкулра вĕренекен чăваш курсанчĕсем хăйсен, пултарулăхне кăтартма йурă, ташă кружокĕ организацилерĕç.

Кружок Хĕрлĕ çар 20 çул тултарнине уйавлама хастарлăн хатĕрленет.

Анисимов.

Пурнăçа кĕмен наказсем пирки

1934 çулта Шупашкар районĕнчи Шурчкасси йалсоветĕнчи суйлавçăсем чылай кирлĕ ĕçсем тума йалсоветне наказсем парса хăварнă. Вăл наказа йалсовет тивĕçлипе пурнăçа кĕртсе пымасть. Наказра шкул çуртне çитнĕ ачасене кашнинех 7 çул вĕрентессишĕн тăрăшмала, тенĕ. Ăна йалсовечĕ пурнăçламан, 18 ача йалти шкула пĕтернипех йулнă. Наказра вулав çурчĕ валъли çĕнĕ çурт туса памала, халъхи вулав çуртĕнче шкул ачисем валъли столовăй уçмала, тенĕ. Йулашки вăхăтра вулав çуртĕнче лавка уçрĕç. Шкул ачисем валъли столовăй уçма шутламаççĕ те.

Вылъăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе те наказра хытă каланă. Каганович йачĕпе тăракан колхоз ферминче 1937 çул пĕтнĕ çĕре 30 пуç ĕне пулмала, тенĕ. Унта, 1938 çул пуçланнă çĕре, ĕне 12 пуç кăна шутланать. „Хĕрлĕ Çар“ колхозра хур ферминче 250 пуç пулмала, унта та хурсем 69 пуçа кăна çитнĕ.

Йалсоветне кĕрекен çулсене, кĕперсене вăхăтра йусаса тăмаççĕ.

Йалсовечĕ йединоличниксем хушшинче ĕçлемест.

А. Моисейев.

Колхозсем ăмăртăва тухрĕç

ВĂРНАР (хамăр корр.). Ку тарана çитиччен районри колхозниксемпе йединоличниксем вăрман хатĕрлев ĕçне начар хутшăнса ĕçленĕ. Ку Пинер вăрманпункчĕ çумне çирĕплетнĕ йалсоветсемпе колхоз председателĕсен канашлăвĕнче те лайăх палăрчĕ. Колхозсенчен Шĕнерти „Майăн 1-мĕшĕ“, Нурăсри „Искра“ колхозсем çеç лайăх ĕçлеççĕ. Вĕсем квартал планне тултарасси патне çывхарса çитнĕ те ĕнтĕ. Ытти колхозсем вăрман ĕçне кирлĕ ĕç вырăнне хуманнипе, плана тултарассине вăрăма чăсса пынă.

Кăмпалти, Тури Кăканарти, Карачурари тата ытти колхозсем хăйсен планĕсене тултарассишĕн питех те сÿрĕккĕн кĕрешеççĕ. Кăканар колхозĕ 596 фесметр хатĕрлесе 1052 фесметр турттарас вырăнне, 103 фесметр хатĕрлесе 206 фесметр çеç турттарнă.

Канашлура тухса калакансем вăрманпромхоз работникĕсем чиновникле ĕçлени çинчен нумай каларĕç. Малтикасри „Пĕрлешÿ“ колхоз председателĕ Николайев вăрманпункт работникĕсем йединоличниксемпе ĕçлессине манса хăварнине фактсемпе çирĕплетсе парать.

Канашлăва пухăннă йалсовет тата колхоз председателĕсем вăрман хатĕрлев планне тултарассипе кайа йуласа пырассине хăвăртлăн пĕтерессишĕн Çарăклă вăрманпункчĕ çумне çирĕплетнĕ йалсоветсемпе колхозсене социалисăмлă ăмăртăва чĕнчĕç. Кашни йалсовет, колхоз хăй çине пĕрремĕш кварталти вăрман хатĕрлев планне февралĕн 10-мĕшĕ тĕлне тултарма пулса пĕр-пĕринпе ăмăртăва тухрĕç. Тепĕр куннех чылайĕшĕ вăрман ĕçлеме йышлăн тухма тытăнчĕç.

Уйрăм бригадăсем организацилеççĕ

ТРАК. Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Канашпа Шупашкар хушшинчи чукунçул строителствинче лайăх ĕçленĕшĕн куçса çÿрекен хĕрлĕ йалава Трак районне пани колхозниксемпе йединоличниксене татах та хавхалантарчĕ. Нумай колхозсемпе йалсовечĕсем строителствăра чукунçул туса пĕтеричченех ĕçлеме пулаççĕ. Халĕ йатарласах уйрăм бригадăсем организацилесе, хастаррăн ĕçе тухаççĕ. Йанварĕн 25-мĕшĕнче чукунçул тунă çĕре Йамаш йалсоветĕнчен çурран 51 çын, лашапа 13 çын, Мартынкасси йалсоветĕнчен çуран 39 çын, лашапа 11 çын тухрĕç.

Колхозниксен хастарлăхĕ нумай ÿсни курăнать. „Волга“ колхоз членĕ Лапшина йулташ строителствă пуçланнăранпах пĕр таталмасăр ĕçлет. Халĕ вăл строителствă пĕтиччченех ĕçлеме пулать.

Кулътурăлă канцелъари

Тĕрлемес йалсовечĕ (Куславкка районĕ) йалсовет канцелъарине кулътурăлă тытассишĕн кĕрешет. Йалсоветне пырса кĕрсенех, унта тасалăх, тата йĕркелĕх пуррине курма пулать. Йалсовет çуртĕнче телефон, радио пур. Таса сĕтел çинче графинпа шыв, илемлĕ чечексем лараççĕ. Стена çумĕнче парти çулпуçĕсен сăнĕсем çакăнса тăраççĕ. Халĕ йалсовет председателĕ Охримов йулташ Тĕрлемес йалсоветне електричествă кĕртме хатĕрленет. Ку тĕлĕнпе йуписене хатĕрленĕ те ĕнтĕ.

И. Сидоркин.

Колхозниксен библиотекисем

ШĂХАСАН. Атнашри Киров йачĕпе тăракан колхозри чылай колхозниксем библиотекăсем туйанчĕç. Акă, Исайев Иван опытник библиотекинче 272 кĕнеке, Йакимов, Сергейев, Степанов, Денисов, Каховский колхозниксен бибиотекисенче кашниннех 150 таран тĕрлĕ кĕнекесем пур. Вĕсен библиотекисенче уйрăмăнах Ленинăн, Сталинăн, призведенийĕсем тата йалхуçалăх ĕçĕсем çинчен калакан кĕнекесем ытларах.

Т. И.

Вăрман хатĕрлевĕ

Тимсĕрлĕх тыткăнĕнче

Вăрманпромхозран телефон тăрăх Пинер вăрманпунктĕнче миçе стахановец пурри çинчен ыйтаççĕ. Телефон патне пынă счетоводăн сăн-сăпачĕ пĕрре шуралса, тепре кĕрелсе кайать Ним калама аптăранипе çÿлеле йе таврала çавăрăнкаласа пăхса илет. Миçе стахановец пуррине калакана тĕл пулмасть. Пинер вăрманпунктĕнче унашкал çынсем пачах та çук вара. Начальник Йефимовичрен пуçласа деçатниксем патне çити никам та стахановла йухăмпа интересленмен. Çавăнпа пĕлмеççĕ те ĕнтĕ вĕсем стахановецсем мĕнчул пурри çинчен. Çав вăхăтрах кунта йапах ĕçе суйа цыфăрсемпе витме пултаракан хăйулăх çитерекен çынсем сахал мар вара. Счетовод та вĕсен хисепнĕх кĕрет. Вăл акă халĕ те пĕр иккеленмесĕрех: пирĕн вăрманпунктра 4 стахановец, тесе пĕлтерчĕ. Çакăнтан тăвата стахановеца Вăрнарта та, Шупашкарта та „учота“ илчĕç. Кăмсем вĕсем? Ун çинчен никам та пĕлмест..

Кунашкал йала Вăрнар вăрманпромхозĕн пĕтĕм системине сарăлнă. Ку ĕнтĕ вăрманпромхоз руководителĕсем тимсĕрлĕх тыткăнĕнчен халĕ те тухманни, руководствă ĕçне алла илменни çинчен калать.

Фактсем те çавăн çинченех калаççĕ. Кивĕ меслетпе йертсе пыни вăрманпромхоза массăран уйăрăлса кайасси патне илсе пычĕ. Вăрманпромхоз 1937 çулта IV-мĕш квартăл планне тултарайман. Кăна вăрманпромхоз работникĕсем ĕç вăйĕ çитĕлĕксĕрри çине йăвантарасçĕ. „Ĕç вăйĕ çитмест“ тенипе ĕçри пур ирсĕрлĕхсемпе çитменлĕхсене хупласшăн. Çапла-и вара? Çук, ĕççем урăххи çинчен калаççĕ. Ĕç вăйĕ çитменни вăрманпромхоз колхозниксемпе çыхăнса ĕçлемен-нинчен килнĕ. Вăрманта ĕçлеме колхозниксемпе договăрсем тăвассине нумай çĕрте правленисемпе çеç тунă. Йединоличниксене пачах манса хăварнă. Вăрманта йалан ĕçлекен кадрсем хатĕрлес пирки те ĕçлемен. Вăрнар вăрманпунктĕнче йалан ĕçлекен кадрта 100 çын пулмала. Халĕ 4 çын çеç ĕçлеççĕ. Ытти вăрманпункчĕсенче те çавнашкалах.

Вăрманпромхоз руководителĕсен тата партипе профсойуз организацийĕсен йăвашчуйлăхне пула работниксем хушшинче ĕç дисциплини хытă сÿрĕкленнĕ. Вăл пур ĕçре те: механисăмсемпе усă курассинче, ĕçе организацилессинче, учот, кулътмассăллă тата суту-илÿ ĕçĕсенче те палăрать. Çарăклари механизациленĕ çул çинче графиксăр ĕçлеççĕ. Автомобилсемпе туллин усă курассишĕн никам та тăрăшмасть. Вĕсене йусассине кирлĕ пек организацилемен. Пĕтĕмпе 11 машина пулсан, вĕсенчен 7-шĕ çеç ĕçлеççĕ. Вĕсем те пĕчĕк тухăçлăх параççĕ.

Иртнĕ çулта кашни машин çумне виçĕ прицеп çирĕплетни лайăх тĕслĕхсем кăтартнă. Кун пек тума халĕ те условисем пур. Прицепсем çитеççĕ. Ун çинчен вăрманпромхоз директорĕ Сазанов та нумай калаçать. Анчах пурнăça кĕртме хăйулăх çитерейместь-ха. Механизациленĕ çул йанварĕн 20-мĕшĕ тĕлне квартăл планне 15 процент çеç тултарнă.

Рационализациленĕ инструментсемпе те кирлĕ пек усă курмаççĕ Лучковăй пăчкăсем 177 штук, „Кроскод“ пăчкăсем 120 штук пур. Вĕсемпе ăçта тата мĕнле усă курнине шута илмен. Вăрман хатĕрлев тĕлĕшпе ĕçлекен специалис Петров механисăмсемпе тата рационализациллĕ инструментсемпе усă курма вырăнсене тухса çÿресе вĕрентмест.

Вăрманта ĕçлекен ĕç вăйĕпе усă курас тĕлĕшпе пачах ĕçлемеççĕ. Стахановла йухăм çине, ĕçе тĕрĕс организацилесси çине чиновникле пăхни пысăк чăрмав кÿнине халĕ те тавçăрса илмеççĕ. Тĕрĕссипе каласан, ирсĕрлĕхсем пуринчен ытла çак участкăсенче пулаççĕ. Акă, фактсем: вăрманпромхозăн сводки тăрăх тыçачниксем 22 çын, стахановецсем 18 çын шутланаççĕ. Ку хисепре камсем тăнине никам та уççăн пĕлмест. Вĕсен ĕçĕпе интересленмеççĕ. Стахановецсен лайăх опычĕсене сарса пыма кирлĕ условисене пăрахăçа кăларнă. Производствăлă канашлусенче стахановецсем çинчен сахал калаççĕ. Рабочисене вĕсем мĕнле ĕçленине пĕлтерсех тăман. Ударниксем çинчен пачах та манса кайнă.

Вăрманпромхозра стахановла ĕçлекенсен йышĕ вăрманпромхоз кăтартнинчен чылай нумайрах. Потехин, Николайев шоферсем йаланах лайăх тĕслĕхсем параççĕ. Вăрнар вăрманпунктĕнче ĕçлекен Журавлъов бригади нормăна 170 процент тултарать. Пинер вăрманпункчĕн Игнатйев бригади те нормăна йаланах ирттерсе тултарать. Анчах вĕсене, йединоличниксем, тесе стахановла ĕçлекенсен ретне кĕртмеççĕ. Шĕнерти „Майăн 1-мĕшĕ“, Нурăсри „Искра“ колхозсем квартăл планне тултарасси патне çывхарса пыраççĕ. Вăл колхозсем те хисеплĕ шутра мар.

Колхозсем пуйан та кулътурăлă пурнăçпа пурăнаççĕ. Вĕсем вăрмана ĕçлеме пырсан та çавнашкал пурнăçпах пурăнасшăн. Çакна Вăрнар вăрманпромхоз руководителĕсем тата партипе профсойузсен вăрманти организацийĕсем вĕçне çитиех ăнласа илмен. Питех те тĕлĕнмеле, вăрманпромхоз директорĕ Сазановпа „Леспродторг“ директорĕ Моисейев халĕ те пекарнисемпе столовăйсем валъли вутă тăратас пирки калаçса татăлаймаççĕ. Вĕсем тĕлсĕр ĕçленине пула Пинерти пекарнинче ĕçлекен повар хăй укçипе вутă илсе çăкăр пĕçерет. Столовăй пуçлăхĕсем те çавăн патне çитсе тăнă. Суту-илÿ ĕçĕнче çирĕп алă çук. Çавăнпа вăл ĕç хăй тĕлĕн çеç пулса пырать. Растратăсен хисепĕ те пысăк.

Колхозниксемпе йединоличниксем вăрман ĕçлеме пысăк хавасланăхпа тухаççĕ. Вăрнар вăрманпромхоз руководителĕсен, вăрманти организацисен вĕсене лайăх йышăнса илсе тухăçлăн ĕçлеме условисем туса памала. Кабин гра мар, вăрманта, бараксенче, квартăлсенче ĕçлемеле. Унта мĕн çитменнине ытларах курма пулать. Ĕçе вăйлатмали майсем те унтах. Плана ăнăçлăн тултарса ĕçлеме пĕтĕм ĕçе стахановла йухăма вăйлатса пынă никĕс çинче организацилемеле. Апла тума кашни работник хăйĕн вырăнĕнче пулни, районри организацисем йаланах пулăшса пыни кирлĕ.

М. Титов.

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн ларăвĕ

Йанварĕн 25-мĕшĕнче ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн черетлĕ ларăвĕ пулса иртнĕ,—ларăва В. М. Молотов йулташ йертсе пынă.

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ ССР Сойузĕн Финанс Халăх Комиссарĕн Зверев йулташăн докладне итлесе, ССР Сойузĕн 1937 çулхи тата 1938 çулхи I-мĕш квартăлти государствă бюджечĕ çинчен сÿтсе йавнă.

Государствăн 1937 çулхи бюджетне, 1936 çулхипе танлаштарсан, доходсем йенпе—14,8 процент, расходсем йенпе—14,9 процент ÿстерсе тултарнă.

Государствăн 1938 çулхи бюджечĕн ССР Сойузĕн Финанс Халăх Комиссариачĕ тăратнă пройектне пăхса тухса, ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ пройекта туса çитерме чылай кăтартусем панă. Государствăн 1938 çулхи бюджечĕ 1937 çулхипе танлаштарсан чылайах ÿсет.

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Государствă банкĕн 1937 çулхипе 1938 çулхи I мĕш квартăлти кредит планне сÿтсе йавнă тата ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çумĕнчи Государствă План Комиççин Положенийĕпе структурине пăхса тухнă.

Государствă План Комиççин пĕтĕм халăх хуçалăхĕн планĕсене хатĕрлесе ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Советне тăратмала тата ССР Сойузĕн Халăх Комиссариачĕсемпе сойузлă республикă сем туса хатĕрлекен плансем тăрах закључени памала. Çав ĕçе тунă чухне Государствă План Комиççин тĕп задачи çакă пулат: социалисăмла хуçалăхăн тĕрлĕ отрăçлисем—Сойузăн халăх хуçалăх планĕ тăрах — тĕрĕс виçесемпе шайланса ÿссе пычч̆ĕр, социалисăмла хуçалăхăн пĕр-пĕр отрăçĕлĕсем ÿснĕ çĕртех теприсем кайа тăрса йулни ан пултăр. Çĕнĕ Положени тăрах Государствă План Комиççийĕн халăх хуçалăхĕн çирĕплетнĕ планĕсене пурнăçа кĕртнине тĕрĕслес тĕлĕшпе тимлĕн ĕçлемеле,—çак ĕçе Государствă План Комиççийĕ халиччен туса пыман пулнă.

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1938 çулхи йалхуçалăх ĕçĕсен планĕ çинчен—совхозсемпе колхозсем тата йединоличниксен хуçалăхĕсем тăрах—ССР Сойузĕн Çĕрĕç Халăх Комиссарĕн Ейхе йулташăн докладне итленĕ.

Иртнĕ çулсенче йалхуçалăхĕнчи çуркуннехи тата кĕркуннехи ĕçсен планĕсене уйрăмăн, тĕрлĕ вăхăтра çирĕплетнĕ. Кăçалхи план йалхуçалăхĕнчи пĕтĕм тĕп ĕçсем тăрах çултăлăклăха заданисем парат. Çавă вăл колхозсемпе совхозсене хăйсен производствăпа финанс планĕсене лайăхрах тума, государствă заданийĕсене тултарма лайăхрах хатĕрленме май парат.

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1938 çулхи йалхуçалăх ĕçĕсен планĕ çинчен йышăннă постановленийĕ пичетлесе кăлараççĕ. (ТАСС).

ССР Сойузĕ тата Йапони хушшинче почтăпа посылкăсем çуретме вăхăтлăха чарнă

1937 çулхи декабĕрĕн 19 мĕшĕнче Совет Сойузĕн почтă самољочĕ сухалса кайнипе Манчжоу-Го территорийĕ çине анса ларнă. Йапонипе Манчжоу-Го влаçĕсем нумай вăхăт хушши ĕнтĕ совет гражăнĕсен самољот çинче пулнă почтă корреспонденцине, самољота тата љотчиксене хăйсем патĕнче саккунсăр тытса тăраççĕ. Совет правителстви темиçе хут та ыйтнă пулин те çав ыйту тăрăх Йапони правителстви кирлĕ пек ответ паман. Çавна май ССР Сойузĕн Çыхăну Халăх Комиссариачĕ Йапонин Почтă управленине çак уйăхăн 27-мĕш кунĕнчен пуçласа Совет Сойузĕпе Йапони хушшинче почтă посылкисем çÿретме чарса лартни çинчен пĕлтернĕ.

Çавна—почтă посылкисене çÿретме чарса лартассине—ССР Сойузĕпе Йапони почтă посылкисем çÿретесси çинчен йышăннă килĕшÿн 5 мĕш статйи тăрăх тунă.

Совет Сойузĕнчен Йапонийе почтă посылкисем йамаççĕ, Йапонирен те йышăнмаççĕ.

Урăхçĕршывсенчен ССР Сойузĕ урлă Йапонийе йанă тата Йапонирен ССР Сойузĕ урлă урăхçĕршывсене йанă почтă посылкисене—çак çулхи йанварĕн 28 мĕшĕнчен йанисене, ССР Сойузĕпе Йапони хушшинче почтă посылкисем çÿретме чаръннă вăхăтра ССР Сойузĕн территорийĕвче пулнисене—адрес тăрăх йараççĕ. Çавăн çинчен урăхçĕршывсен почта управленийĕсене тата Берн хулинчи пĕтĕм тĕнчери почтă бÿроне пĕлтернĕ. (ТАСС).

О. Й. Шмидт йулташа Папанин ушкăнне пăр çинчен илсе тухакан експедицине йертсе пыма уйарнă

Правителствă постановленийĕ тăрăх, Çурçĕр çулĕсен Тĕп Управленин начаљникне—Совет Сойузĕн Геройне О. Й. Шмидт йулташа пăрпа пĕрле куçса çÿрекен „Çурçĕр пољусĕ" станцинчи çынсене пăр çинчен илсе тухакан експедицине йертсе пыма ирĕк панă.

О. Й. Шмидт йулташ çав ĕçре пулнă вăхăтра Çурçĕр çулĕсен Тĕп управлени начаљникĕн ĕçĕсене туса пыма Г. А. Ушаков йулташа çирĕплетнĕ.

О. Й. Шмидт йулташ експедицине февраљ уйăхĕн пирвайхи кунĕсенче каймала. (ТАСС).

Пограничник-геройсене пытарни

ГДОВ (Ленинград облăçĕ), 26 I (ТАСС). Пайан Гдов хули траурлă тум тумланнă. Кăнтăрла иртсен тăватă сехетре мухтавлă пограничниксене—Лазник тата Прохорчук йулташсене пытарнă. Вĕсене йанварĕн 19-мĕшĕнче тăван çĕршыва сыхланă çĕрте—Совет Сойузĕпе Естони чиккинче—вĕлернĕ. Траурлă демонстрацире хулари халăх, сланц кăларакан рабочисем, колхозниксем, МТС рабочийĕсем—пурĕ пилĕк пин çын ытла пулнă.

Пытарнă чухне пограничник-геройсем çинчен, тăван çĕршывăн таса чĕрелĕ ывăлĕсем çинчен чикĕри отрйадăн командирĕ майор Петрочук йулташ тухса каланă. Çавăн пекех тата пограничник-боец Кабуза йулташ, колхозник Йегоров йулташ т. ыт. те тухса каланă.

Совет часовойĕсене-геройсене хула варринчи плошчĕдре пытарнă.

ИСПАНИРИ ФРОНТСЕНЧЕ.

ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Дивизи командирĕ Компесино (сылтăм хĕрринчи) Сигуенцы патĕнче республикă позицийĕнче. Сойузфото).

КИТАЙРИ ВĂРÇĂ

ÇУРÇĔР КИТАЙРА

ХАЊКОУ, йанварĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Иулашки икĕ кун хушшинче Таљцзин-Пукоу чукунçул секторĕнчи фронтра пысăк улшăнусемех пулман. Чукунçулăн сурçĕрти участкине хаљ те Йапони çарĕсене илсе пыраççĕ. Шаљдун провинцинче Йапони çарĕсене фронт лини çине илсе пырасси вăрахăн пулса пырат, мĕншĕн тесен Хуанхе йухашшыв урлă каçакан чукунçул кĕперне аркатнă, çулне Китай çарĕсем çĕмĕрнĕ.

Темиçе кун кайала Йапони çарĕсем Цзинин йатлă хулана (Шаљдун провинцин кăнтăрпа хĕвеланăç пайĕ) çĕнĕрен пырса кĕнĕ, анчах та Китай çарĕсем хулана виçĕ йенчен хупăрласа илнĕ. Çапăçусем чукунçул линийĕн çуф çулĕнче Цзоуçанпа Јањсадйан хушшинче (Шаљдун провинцинче, Йанчжоуран кăнтăрала) пулса пыраççĕ.

Китай партизанĕсен пысăк отрйачĕсем Цуйфу (Цзининрен çурçĕрпе хĕвелтухăçнеле) çине тапăннă.

Йанварĕн 23-мĕшĕнче Китай партизанĕсем Ањцу йатлă хулана йышăннă (вăл хула Шаљдун провинцин хĕвелтухăç пайĕнче, Вейçањран 50 километр кăнтăрала).

Цзинањ—Циндао чукунçул таврашĕнчи лару-тăру çинчен сведенисем çук. Çапах та Чжучене (Циндаоран хĕвеланăçнеле) Китай çарĕсем тытса тăни паллă.

Вейçањре Йапони салтакĕсем пин çын ытла шутланаççĕ.

Бейпин—Хањкоу чукунçулĕ патĕнче нимĕнле улшăнусем те пулман.

ВАТАМ КИТАЙРА

ХАЊКОУ, йанварĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Тањцзин-Пукоу чукунçулĕн кăнтăр участкинчи сектортa китайецсем Лињхайгуањ станцине (Фын-Йанран çурçĕреле—Ањхуей провинцинче) хÿтлеççĕ. Йанварĕн 24-мĕшĕнче Йапони самољочĕсем Фын-Йан тата Хуайуйањ (Фын Йанран хĕвеланăçнеле) çине бомбăсем пăрахнă. Сывлăшран бомбăсем пăрахнипе пула Лункай чукунçулĕ çинче Çуйчжоупа Кайфын хулисем хушшинче пуйăссем çÿреме чарăннă.

Çав фронтрах, Йанцзы йухашшывĕнчен кăнтăртарах йанварĕн 23-мĕшĕнче çĕрле Китай çарĕсем Уху хули çывăхĕнчи вырăнсене пилĕк хутчен пырса атакăланă, уњ хыççăн вĕсем партизансемпе пĕрле Уху хули çине тĕрлĕ йенчен тапăнма пуçланă. Цишањ хули патĕнче тăватă сехет хушши хире-хирĕç артиллерирен персе тăнă. Уху районĕнчи высотасенче хайар çапăçусем пулса пыраççĕ.

Китай çарĕсем пĕр кун хушшинче темиçе хутчен атакăласа тата штыксемпе пырса кĕрсе йапонецсене çав высотасенчен хăваласа йанă. Йапони çарĕсем пĕр полк составĕ чухлĕ çĕнĕ подкреплениссем илнĕ хыççăн çÿлте асăннă высотасене тепĕр хут йышăннă. Наступлени тума йапонецсене Уху хули патĕнчи Йанцзы йухашшывĕ çинче тăракан канонеркăсем (вĕсем пурĕ саккăр пулнă) пулăшнă.

Ку районра Китай авиацийĕ пысăк активлăх кăтартат. Йанварĕн 23-мĕшĕнче Китай самољочĕсен ескадрилйи Уху хулинчи аеродром çине бомбăсем пăрахнă, çак аеродромра пысăк пушар пулнă. Йапонин саккăр самољотне сийенленĕ. Çав кунхинех Уху, Луцзйан тата Суањченрен хĕвелтухăçнерех тăракан Йапони çарĕсен позицийĕсем çине те бомбăсем пăрахнă. Йанварĕн 24-мĕшĕнче Китайăн тăхăр самољочĕ Суањчен çине пырса тапăннă чухне Тайпин йатлă йухашшыв патĕнче Йапони çарĕсем çине атакăланă. Йапони çарĕсем шыв урлă кимĕсемпе каçнă пулнă. Китай самољочĕсем вунă кимĕ ытла шыва путарнă. Кимĕсенче кашнинчех салатаксем пулнă.

ХАЊКОУ, йанварĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Ухуран хĕрĕх километр çурçĕреле тăракан Хеçањ йатлă хулана Китай çарĕсем йышăнса илнĕ. Темиçе хутчен те хайар атакăсем тунă хыççăн Йапони çарĕсем кайала Уцзйан йухашшывĕ йенелле чакнă. Хăйсем хуларан тухса кайас умĕн вĕсем хулана темиçе çĕрте вут тивĕртсе хăварнă.

ХАЊКОУ, йанварĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС) Йанварĕн 24-мĕшĕнче Йапони авиацийĕ Ичан йатлă хула (Хебей провинцинче—Йанцзы йухашшыв хĕрринчи хула) çине вăрçă пуçлашăранпа чи пирвайхи хут пырса тапăннă. Пурĕ 12 самољот Таййуањрен вĕçсе пырса 10 бомбă пăрахнă. Мирлă пурăнакан халăхсем хушшинче вилнисемпе аманнисем хĕрĕх çын ытла шутланаççĕ, нумай çуртсем ишĕлнĕ.

Фронтăн Хањчжоу участкинче йапонецсен тылĕнче Китай партизанĕсем пысăк активлăх кăтартаççĕ. Йанварĕн 23-мĕшĕнче ирхине Чанањчен çине, Хучжоуран çурçĕрпе хĕвелтухăçнеле тапăннă. Йапонецсене 30 çын вĕлернĕ. Китай çарĕсем Фуйана (Хањчжоуран кăнтăрпа хĕвеланăçнеле) иккĕмĕш хут туртса илнĕ хыççăн Йапони позицисем хаљ кунтан вунă километр çурçĕреле тăраççĕ.

КĂНТĂР КИТАЙРА

ЛОНДОН, йанварĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агенствин Гонконгри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, йанварĕн 25-чĕ Йапони крейсерĕ Пањтоу (Гуандун провинцин кăнтăр пайĕнче) хули çине пенĕ. Пурĕ 15 минут хушши пенĕ.

Рейтер агенствин корреспонденчĕ çырнă тăрăх, китайецсем Пањтоу районĕнче вăйлă укреплениссем тунă.

Советăн Китайри полпречĕ ĕнентерÿ грамоти пани

ЧУНЦИН, йанварĕн 24-мĕш. (ТАСС). Йанварĕн 23-мĕшĕнче Чунцинре, Китайăн вăхăтлăх столицинче, СССР-ĕн çĕнĕ полпречĕ Луганец-Орељский Линсен президента ĕнентерÿ грамоти панă.

Çакна палăртса хăварма кирлĕ: совет полпречĕ Китай правителстви патне пырса кайни Китай правителстви ĕçлекен вырăна Чунцине куçарнă хыççăн йутçĕршыв посолĕ пĕрремĕш хут пыни пулнă.

Рузвељт протесĕ

ВАШИНГТОН. Йанварĕн 26-мĕш (ТАСС). Америкăри Пĕрлешÿлĕ Штатсен президенчĕ Рузвељт хăш пĕр шултра компанисем рабочисен ĕçукçине чакарма хатĕрленнине хирĕç татăклă сăмах тухса каланă. Промышленниксем,—тенĕ Рузвељт,—çак хĕлте йе çуркунне ĕçукçине чакараççĕ пулсан, çапла тунипе вĕсем рабочисен тавар илес пултарулăхне чакарассине хăвăртлатаççĕ, вăл вара економикăлă пурнăçа начарлатат. Ун пек пулсан,—тет малала Рузвељт—правителствăн халăха таварсем илме пултарас май пама ирĕксĕрех урăх майа куçма тивет. Рузвељт промышленниксене хаксене йÿнетме хушнă, çапла тунипе вăл таварсем ытассине ÿстерме тата промышленнăç активлăхне ÿстерме май памала.

Англи морйакĕсем Китайа пынă

ЛОНДОН, 24. (ТАСС). Британиш Йунайтед пресс агенствин Шанхайри корреспонденчĕсем тата Ексченйндж телеграф çапла пĕлтереççĕ: йанварĕн 23-мĕшĕнче Вейхайвей портĕнче (Шањдун провинци) Англин „Сандвич" йатлă карапĕ çинчен Англи морйакĕсен отрйадне антарнă. Вĕсене Англи çыннисене тата вĕсен пурлăхĕсене сыхлама кирлĕ пулнисе илсе пынă.

Корреспондентсем малала çапла пĕлтереççĕ: Лунњгаура, Вейхайвейран темиçе километртa, Йапонин чылай çарĕсене илсе пырса антарнă. Кунта илсе килнĕ Йапони çарĕсем, „Шањдун çурмаутравне Китай çарĕсемпе партизанĕсенчен тасатас шутпа", Йапонин Циндаори çарĕсемпе пĕрлешме ĕмĕтленеççĕ.

ХРОНИКĂ

** ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Н. К. Соколов йулташа ССР Сойузĕн Финанс Халăх Комиссарĕн заместителĕ пулма çирĕплетнĕ.

** ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Д. Н. Шаталов йулташа ССР Сойузĕн Финанс Халăх Комиссарĕн заместителĕ пулма çирĕплетнĕ.

— ССР Сойузĕн Аслă Совет Президиумĕн указĕпе В. К. Деревйанский йулташа ССР Сойузĕн Финљандири полномочнăй представителĕ пулма уйăрса лартнă. (ТАСС).

Савăнтаракан спектакљ

Йанварĕн 25-мĕшĕнче Чăвашсен Академи театрĕнче Чăвашсен театр училишчин IV-мĕш курсĕнчи выпускниксем Карло Гољдонин „Суйĕс" („Лгун") комедине кăтартрĕç (Праудин й. постановки).

Спектакљ куракансене питех те килĕшрĕ. Вĕренмеле лартса кăтартнă спектакљ пирĕн театр ĕçне вĕренекен çамрăксем, сценăлă искусствă ĕçне йуратсах чунĕсене паракан, çитес сывăх вăхăтрах сценă çинче хăйсен тивĕçлĕ вырăнне йышăнма çирĕп шанчăк паракан çамрăк вайсем ÿснине аванах кăтартат. Чи малтан çавна сценă çинче курса савăнтăмăр епĕр, çак постановкăна куракансем. Паллах, пйесăра выљакансем пурте çамрăкха, вĕсем хăйсен ĕçне вĕренсе çеç пыраççĕ. Вĕсен вăййинче çитменлĕхсем питех те нумай. Сăмахсене тÿсме çук хăвăрт калаçаççĕ, çиччĕмĕш, саккăрмĕш ретре лараканссемшĕн нумай сăмахсем çитмесĕр сухалаççĕ. Хăшпĕрисем хăйсен сăмахĕсене пăтратаççĕ, ик-виç хут калаççĕ (сăмахран, И. Гурйева Розаура ролĕнче). Комедине чăвашла начартарах куçарнă, ку вара çамрăк артиссене питех те чăрмантарат. Анчах çамрăк артиссем ун пек чăрмавсем, çитменлĕхсем пулсассăн та, хăйсен ролĕсене килĕшÿлĕ аван выљарĕç. Уйрăм йулташсем çавăрăнăçусăртарах пулни сисĕнет пулсан та, çамрăк артиссем пысăк театр сцени çинче сухалса каймаççĕ, хăйулă выљаççĕ, сценă çинче пурăнма пĕлеççĕ. Беатриче ролне выљакан А. Чайкова, Н. Гурйева (Розаура), Р. Федорова (Коломбина ролĕнче), В. Харитонов (Лелио), Д. Смирнов (Оттавио), В. Петров (Флориндо), Суворов (Арлекин) тата ытти те. Кусем пурте хăйсен ĕçне тата тимлĕрех вĕренсе тата пысăк çитĕнÿсем тума, ÿссе инçе кайма пултараççĕ. Серенада йурлакан Йе. Киселева, кăштах хăйусăртарах йурларĕ пулсан та, пит те илемлĕ чечен сасăпа аван йурласа пачĕ. Йуррине, сонетне те темшĕн чăвашла куçарман тата. Чăвашла постановкăра вĕсене чăвашла куçарса йурланă пулсан тата авантарах пулнă пулĕччĕ. Çамрăк артиссен çитменлĕхсем курăнаççĕ пулсан та, куракансем пит килĕштерчĕç вĕсен вăййине, хăйуллăн алă çупса ăшă кăмăлпа тав турĕç. Пысăк çитĕнÿсем тунă вĕсем. Малала ÿсме пысăк шанчăк параççĕ. Ку спектакље театр сцени çинче татах лартса кăтартма ытас килет çамрăк артиссенчен.

Комедин чăвашла текстне тÿрлетмеле, йакатмала пулат.

Уйăп Мишши.

КĔСКЕН

Ленин вилни 14 çул тултарнă тĕле Елĕк районĕнчи „Красное Сормово" колхозра кружок организациленĕ. Кружокра колхозниксем В. И. Ленинăн пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен вĕренчĕç. Зањатине пурĕ 64 колхозник çÿрерĕ. „Красное Сормова" колхоз çуракине хатĕрленессипе те вирлĕн ĕçлесе пырат.

В. Петров.

Шупашкарти педрабфакри студентсем Пушкин писател вилни 101 çул тултарнине асăнса, Пушкин касĕ туса иртерме хатĕрленеççĕ.

Литературă кружокĕн членĕсем йатарласа стена хаçачĕ, журнал кăлараççĕ. Пушкин сăввисене пăхмасăр калама вĕренеççĕ. Çавăн пекех Пушкин кĕтессипе выставкине тăваççĕ. Унта Пушкин писателĕн кунçулĕпе ĕçĕсене кăтартакан кĕнекесемпе ÿкерчĕксем пулаççĕ.

П. Синичкин.

Çак кунсенче çеç Елĕкре ача суратмалли çурт туса пĕтерчĕç. Ку çуртра 20 койкă пулмала. Халĕ емелсем, медикаментсем çителĕклĕ илсе хатĕрленĕ, акушеркăсем те пур.

Çавăн пекех Елĕкре санитарипе гигиенă магазинĕ çукчĕ. Кăçал вăл магазина та туса пĕтерчĕç.

В. Йефремов.

Вĕренÿ çулĕ пуçланнă кун Тракри ватам шкулта вĕренекен ачасем хушшинче трахом чирĕпе чирленисем 120 ача пулнă. Гаврилов трахработник тăрăшса ĕçленипе, йанварĕн 15-мĕшне 90 ачана трахомран сыватнă. Ытти ачасене вăл йанвар уйăхĕ пĕтнĕ çĕре трахом чирĕнчен сыватса çитерме тăрăшат.

А. Семенов.

Ответлă редактор заместителĕ И. П. ПАВЛОВ—ПИНЕР.

„Ударник" хаçатпа унăн редакторĕсем пирки

Çĕмĕрле комбинатĕнчи „Ударник" хаçат 1937 çулта 60 номĕр тухмала пулнă пулсан, пĕтĕмпе те 32 номĕр çеç тухнă. Çакă вăл редакцинче ĕçлекенсем ÿркенсе ответлăха туймасăр ларнипе тата парти комитечĕ хаçат ĕçĕпе интересленменнинчен килнĕ.

Комбинат 1937 çулта плана тултарассине йалањах ытти предприйатисенчен кайра пынă. Хăшпĕр уйăхсенче плана 60—70 процент кăна тултарнă.

Стахановла йухăм начар саралса пынă. Изобретатељствăпа рационализаци ĕçĕ хăй тĕллĕн çеç пурнăçланса пынă т. ыт. те. Анчах „Ударник" хаçат çаксем çине çаваранса пăхман. Вăл комбинат мĕншĕн начар ĕçлеме пуçланин тĕп сăлтавне тупса, ĕçе йĕркелесе йарасшăн тăрăшман. Хаçат страницинче (32 № илсе пăхсан та) ударниксем хушшинчи ĕçе мĕнле организациленни, лайăх стахановецсем хăйсен опычĕсем çинчен çырнине тупаймăн. Хаçат стахановецсене тĕплĕн пĕлмест. Заводри паллă рекордиссен йачĕсене республикри, районри хаçатсем çинче çапăнса тухсан çеç вĕсенчен çырса илет. Çапла тунипе те ĕнтĕ фактсем кивелсе кайаççĕ, хаçат пахалăхĕ çухалат. Акă пĕр тĕслĕх. Стољарнăй цехри паллă стахановкă Касйанова декабĕрĕн 10-мĕшĕнче плана 316 процент тултарса, çĕнĕ рекорд туни çинчен хаçат 11 кун иртсен çеç çырса пĕлтерет. Çак вăхăтра комбинатра Касйановăран иртсе кайнисем те пулнă (Семенов, Кузин, Гузиков т. ыт.). Стахановла йухăм пуçланса кайни 2 çул тултарни çинчен те хаçат октăбĕрĕн 4-мĕшĕнче çеç умстатйа пекки çырса кăларат. Стахановла йухăм пуçланса кайнăранпа комбинат мĕнле ĕçлеме пуçлани, мĕнле çĕнтерÿсем туни çинчен хаçатра пĕр заметкă та тухман.

Партипе комсомол пурнăçĕ çинчен тĕплĕн çутатса тăрасси хаçат умĕнче тăракан задачăсенчен пĕри пулса тăмала. Анчах питех тĕлĕнмеле. Мĕншĕн-ха хаçат çултăлăк хушшинче те партипе комсомол пурнăçĕ çинчен пĕр статйа та пичетлесе кăларман? Ăçта коммунистсен сăн-сăпачĕ? Мĕн тăваççĕ ~~вĕсем?~~ Паллă мар. Коммунистсен ĕçĕ çинчен хаçатра пĕр строка та çырман.

Хаçат пахалăхĕ начарри, вăл пурнăçран йулса пыни ĕçйалкорсем хушшинче ĕçлессине йĕркелеменнинчен те килнĕ. Комбинатра пĕтĕмпе 3000 рабочийĕ йахăн ĕçлеççĕ пулин те, хаçата çырса тăракансен шучĕ 15 çынтан ытла мар. Уйрăмăнах йулашки вăхăтра хаçатра ĕçйалкорсен заметкисем çав тери сахал пичетленсе тухаççĕ. Акă декабĕрĕн 4-мĕшĕнче тухнă хаçатра пĕр ĕçйалкор çырăвĕ, декабĕрĕн 21-мĕшĕнче тухнă 31-мĕш номĕрте—4, 27-мĕш номĕрте ĕçйалкор çырнă заметкăсем пĕрре те çук. Хаçата пĕтĕмпех редакцинче ĕçлекенсем Антоновпа Йавский хăйсен статйисемпе тултарнă.

Çакă ĕнтĕ вăл ĕçйалкорсен хушшинче ĕçлеменнинчен килнĕ редакци работникĕсем çултăлăк хушшинче те çыракансемпе пĕрре канашлу, пуху туса иртермен. Çавăн пекех стена хаçачĕсемпе ĕçлесси те начар. Хаçат вĕсене вĕрентмест, тунă çитменлĕхсене палăртмаст, обзор çултăлăкра та пĕр-икĕ стена хаçатне çеç панă. Стена хаçат редакторĕсене заочнă вĕренмели курса пĕрре те йавăçтарман.

Чĕлхе тĕлĕшпе хаçатăн нумай улшăну тумала. Хаçатра час-часах „тумала", „каймала", „пĕлмеле", „тыттармала" йе „кĕтетпĕр", „ыйтатпăр" тенĕ сăмахсем туллийех. Предложенисене те тĕрĕс йĕркелемеççĕ. Ун пек чухне заметкăн тĕп шухăшне пăтраштарса, ăнланмала мар туса хураççĕ. Акă ун пеккисем: „пирĕн районра пур çĕрте те стахановкăсем шăтса çитĕнеççĕ" (1937 çулăн 4-мĕш №); „Кашни харпăрхăй ĕçне маларах пĕтерессишĕн тăрăшаççĕ... Вĕсем пайан стахановла вунăкунлăхăн пĕрремĕш кунĕнчех стахановла ĕçлес тесе тăрăшрĕç" т. ыт. те. Йепле „шăтаççĕ-ха" стахановецсем? Стахановецсен стахановла вунăкунлăхăн малтанхи кунĕнче лайăх ĕçлес çукчĕ-ши „Ударник" хаçат шучĕпе? Вăл уншăн тĕлĕнсе кайнă пек çутатса парат. Вырăсла çырнă заметкăсенче те йанăшсем сахал мар („вопросы" вырăнне, „вопорса"—„передмной", — „посленье" тата ытти те).

Иулашкинчен çакна çеç каламала. „Ударник" хаçат редакторĕсем (Лукинпа Илмент) политикă тĕлĕшпе суккăр пулнă пирки хаçат умĕнче тăракан задачăсене ăнланса илмен, хаçата лайăхлатасшăн тăрăшман.

Редакци секретарĕнче Антонов ĕçлет. Вăлах бухгалтер, выпускайушчий редактор тата рабфакри преподавател. Хăшпĕр чухне, редакторсем „йерçеймен" хушăра, хаçата хăй пĕччен кăларса йанисем те пулнă. „Кам вăл Антонов?" тесе ыйтсан, редакторсем „пĕлместпĕр, документсем çук" тенипех иртерсе йараççĕ. Парти комитечĕ те хаçат редакцинче камсем ĕçленине пĕлмест, тĕрĕслесе пăхман. „Епĕ хаçатра ĕçлекенсене ик-виçĕ уйăх хушши кураймастăп. Вĕсем ман патне килмеççĕ, редакцийĕ йаланах хупă тăрат",—тет партком секретарĕ Дмитрийев.

Çапла интересленеççĕ хăйсен хаçачĕпе редакторсемпе парти организацийĕ. Ыйтас килет, кăçал та çакăн пекех ĕçлĕ-ши „Ударник" хаçат? Парти организацийĕ хаçат ĕçне лайăхлатассипе мĕн тума шутлат-ши?

Тырă хатĕрлев Чăваш кантурĕ

Шупашкарта йалан ĕçлеме çакнашкал работниксене чĕнет:

1. *Вăрлăх йенĕпе ĕçлеме технoруксем*
2. *Техник-строител.*
3. *Бухгалтер-ревизор*
4. *Бухгалтерсем*
5. *Аслă бухгалтерсем* (районсенче ĕçлеме)
6. *Оперативлă учот пуçлăхĕ*
7. *Ĕçсене туса пыракан*
8. *Кадрсемпе ĕçлеме ответлă исполнител*
9. *Машинистка*
10. *Ответлă исполнител*
11. *Картотетчик.*

Ĕçукçи килĕшÿ тăрăх. Çак адрĕспе пымала: Калинин урамĕ, 83. Чăвашзаготзерно. А. П. Стипейко йулташ патне. Пысăк квалификацилĕ работниксем валљи хватер пур.

3—3

Ĕç инваличĕсене пĕлсе тăма

Ĕç инваличĕсене пенси парас тĕлĕшпе пуçарнă ĕçсене (зайавленисемпе документсене) Чăваш АССР Социаллă обеспечени Халăх Комиссариатĕнчен пенсионерсем пурăннă тăрăх районсенчи ĕçтăвакан комитетсене йанă. Çавăнпа та малала пенси пирки тухакан ыйтусемпе райĕçтăвкомсем çумĕнчи Социаллă обеспечени уйрăмĕсене каймала.

Шупашкарта, Улатăрта тата Çĕмĕрлере пенси ыйтăвĕсемпе хула совечĕсем çумĕнчи социаллă обеспечени уйрăмĕсене каймала.

Чăваш АССР Социаллă обеспечени Халăх Комиссариачĕ.

3—3.

Шупашкарти суту-илÿ тăвакан уйрăм (ЧЕБТОРГ)

600 кубла метр пăр катса турттарма Кăçалхи февралĕн 1-мĕшĕнче кантур çуртĕнче

торги тăват

Дирекци.

Чăвашсен Коммунисла Йалхуçалăх Аслă шкулĕ

Вĕренме йышăннă йулташсене зањатисем пуçланни çинчен пĕлтерет. Кăçалхи февралĕн 7-мĕшĕнчен те вĕренме пыман йулташсене студентсем шутĕнчен кăлараççĕ.

Академи театрĕнче
Йанварĕн 28-мĕшĕнче
Чăвашла спектакљ
Биљ-Белоцерковский
ПОГРАНИЧНИКИ
10 картинăлă
Режиссор Н. С. АЙЗМАН лартат
Художник А. П. ВЫШЕНСКИЙ
Талон № 95. Абонемент № 8, талон № 1.

„Чăваш коммунĕ" сырăнса илмелли хаксем; 12 уйăха—30 т., 6 уйăха—15 т., 3 уйăха—7 т. 50 пус, 1 уйăха—2 т. 50 пус. Алçырăвсене кайала памаççĕ.

Уполномоченный. Чувашглавлита № 49, Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста. Заказ № 2, Тираж 14.500 53—32 в. к. Т—1.